ÇУРАЛНĂ
ÇĔРШЫВРА

Çуралнă çĕршыв,
Эс ма илемлĕ?
Мĕншĕн яланах
Маншăн хисеплĕ?

Мĕншĕн эп сана
Чунтан юратап?
Ма çапла сана
Эп асла хурап?

Çуралнă çĕршыв
Маншăн пит чаплă:
Манăн çамрăк чун
Унта кăмăллă.

Ма унта ытла
Кайăк юрлать-ши?
Мĕншĕн кăмăла
Уçса ярать-ши?

Хамăн çĕршывра
Мĕншĕн çапла-ши?
Ма хамăр уйра
Чечек хитре-ши?

Çуралнă çĕрте
Мĕншĕн пурнас мар?
Пуç çамрăк чухне
Мĕншĕн савнас мар?

Çуралнă çĕршыв,
Ма илемлĕ эс?
Мĕншĕн яланах
Маншăн хисеплĕ?

1924

МĔНШĔН
ЖУРНАЛ ИЛЕС МАР?

Мĕншĕн журнал илес мар,
Мĕншĕн ăна вулас мар?!
Журнал пире ăс парать,
Пурнăç тума пулăшать.
Пăхăр халĕ Хветĕре
Епле пурнăç тунине!
Унăн пахчи туллиех
Тĕрлĕ çимĕç каш ларать,
Хирти ани ăраснах
Сап-сар ларать хумханса.
Кĕре çитсе перĕнсен
Тем чул улма кăларать,

Аван пулнă анинчен
Пӳлме тулли тыр илет.
Хĕл кунĕнче сивĕре
Пурнать Хветĕр савăнса.
Тырри-пулли çитнипе
Налук тӳлет вăхăтра.
Унпа пĕрлех ыттисем
Асапланса пурнаççĕ:
Вĕсен пахчи çимĕçсем
Çум пуснипе пĕтеççĕ,
Хирти тырă-пулăсем
Типсе-хăрса каяççĕ.
Выçлăх килсе çитсессĕн
Вилес патне çитеççĕ;
Ним тума та пĕлмеççĕ,
Куллен-кунах йĕреççĕ...
Мĕншĕн апла пулать-ши?..
Кунта телей кирлĕ мар,
Нумай ăс та кирлĕ мар, —
Пирĕн Хветĕр яланах
«Ĕçлекенсен сассинче»
Кăтартнă пек ĕçлет вăл:
Çуртри акас анине
Сухалать вăл кĕркуннех,
Хыт сухине çуркунне
Иртерехех тăвать вăл;
Виçĕ пусса пăрахса
Тватă пусса куçнă вăл;
Çак журнала вуласа
Вăл пит нумай ăс илнĕ...
Çавăнпа та Хветĕрĕн
Тырри-пулли пит аван
Пулса пырать яланах...
Мĕншĕн журнал илер  мар,
Мĕншĕн ăна вулас мар?!
Журнал пире ăс парать,
Пурнăç тума пулăшать!!!

1925

ÇАМРĂК ТĂВАНА

Камшăн çуралтăн,
Юратнă тăван?
Чĕр вăйна камшăн
Хăюллăн хуран?

Мĕнле ĕçсемшĕн
Тĕрĕссĕн тăран?
Камшăн эс, камшăн,
Тăванăм, пурнан?

Çапла, тăванăм,
Эп санран ыйтсан
-Мĕскер калĕ-ши

Ырă чĕлхӳ сан?

Мĕн тума тĕпчен
Манран çаксене?!
Ху та эс пĕлен
Манăн чĕрене.

Йывăр кунсенче
Анне çуратрĕ:
Тăшман айĕнче
Пăхса ӳстерчĕ.

Пиллерĕ мана
Вăйлă кĕрешме.
Усал тăшмана
Тĕппех пĕтерме.

Этем тăшманне
Пурпĕр пĕтереп!
Мулăн тымарне
Тĕппех сирпĕтеп!

Эп çак ĕçсемшĕн
Хăюллăн тăрап;
Хура халăхшăн
Чунтан тăрăшап.

Чăтаймасть чунăм
Тăшман пĕтмесĕр!
Çав хаяр мулăн
Пуçне çĕмĕрер!

1925

## УЛАХ ТАКМАКĔСЕМ

Шăпчăк юрлать, шăрантарать,
Чĕрем çемçелсе каять;
Манăн савни калаçнă чух
Чунăм савăнса тăрать.

Хытрах янтра, çамрăк сассăм,
Янтрат эсĕ шăпчăк пек;
Манăн савни комсомолец,
Татса çиес улма пек.

Мана савни юратать,
Шав улаха вăл çӳрет,
Комсомола кӳртесшĕн
Ялан мана ӳкĕтлет.

Эп комсомола кĕреп,
Ырă ĕçе вĕренеп.
Савнипеле килĕштерсе
Пурнăп ĕмĕр ĕçлесе.

Манăн савни комсомолец,
Шав улаха вăл тухать;
Унăн çумне ларсан ман ĕç
Шăрçа пек пулса пырать.

Манăн савни кунта килсен
Улах илемне кӳрет;
Ырă сасси калаçнă чух
Çак мунчана чĕтретет.

Хытрах янтра, ырă сассăм,
Янтра кĕмĕл хăнкрав пек;
Савни патне çитех, юррăм,
Çил çунатлă кайăк пек...

Тусăм кунта калаçнă чух
Çăварĕнчен вут тухать;
Унăн çамрăк ăс-пуçĕнче
Пурнăç çулĕ курăнать.

Манăн Иван сак улахра
Пĕртен-пĕр лайăх ача:
Ăна тăнлă ăс-пуçĕшĕн
Çтан юратмĕ хĕр ача?

Ытти куштан ачасем
Килеç кунта çĕмĕрĕлме;
Çавă ырă комсомолсем
Килеç ăса вĕрентме.

Акă çитрĕç комсомолсем
Хĕрсем патне улаха,
Çемçе чĕлхе-çăварĕсем
Çĕмĕрттереç чăнлăха.

1925?

МАН ЮРĂ

Юратрĕ те саврĕ кăварлă чĕрем
Пĕртен-пĕр илемлĕ, чи лайăх хĕре.

Анчах паян кун ман çап-çамрăк пуçа
Вырнаçрĕ ак тепĕр тĕреклĕ хуçа.

Хĕртен те вăл çывăх, хĕртен те чипер,
Хăватлă вăл ирĕк тăвăл тĕнчи пек.

Ун аслă хăвачĕ çунать те çиçет,
Ун аслă çул-йĕрĕ — хисепсĕр виçе.

Унпах эп паян кун хĕреп те çунап,
Тăвăл пек вĕçмешкĕн саратăп çунат.

Тăван юрă-сăвă! Эс çавă хăват,
Пĕр саншăн ман ĕмĕт паян çул хывать.

Сана çех паян кун сума эп сăвап,
Эс пур хăватран та хăватлă хăват.

1926

ПУШĂН 8-МĔШĔ

Инке, паян чаплă кун, —
Чунăм çĕкленет,
Савăннипе çамрăк юн
Хăватлăн вĕрет.

Паян, инке, сирĕншĕн
Чăн ырлăх кунĕ,
Çакă куна илесшĕн
Юхнă ĕç юнĕ.

Паянхи кун тĕнчипех
Чаплă уяв тăваççĕ,
Ĕçлĕх тĕнчин вăйĕпе
Мула юнаççĕ.

Анчах, инке, çакă кун
Кунта çеç хитре,
Муллă çĕрте илем ун
Вăйлă хĕскĕчре.

Çак праçникĕн илемĕ —
Юпа тивлечĕ,
Пирĕн пусмăр вилĕмĕ
Унтан çеç килчĕ.

Инке, Юпа тивлĕчпе
Пирĕн вĕренес,
Коммунизм ялавне
Çӳлерех çĕклес.

1926

ЧĂВАШ ÇЫННИНЕ -
ХАМĂН ТĂВАНА

Хаклă чăваш çынни — хамăн тăван,
Юрлам халĕ сана юррăма,
Йывăр ĕçре сана йăпатмашкăн
Кăларам-ха хĕрӳ сăввăма.

Эпĕр иксĕмĕр те ĕç ачисем, —

Çуралтăмăр асап йăвинче,
Пире йывăр пурнăç хăвачĕсем
Ӳстерчĕçĕ хăйсен аллинче.

Тимĕрленчĕç пирĕн аллăмăрсем
Хура çĕре чун пек ĕçлесе,
Хурăçланчĕç çамрăк чĕремĕрсем
Ĕç асаппе вăйлă кĕрешсе.

Пирĕн çунса тăран чĕр вăй-хăват
Çĕнĕ пурнăç тума ăвăнчĕ.
Ак ĕнтĕ вăл ăна тинех тăвать,
Пурнăç никĕс çирĕп хывăнчĕ!

Тинех, тăшман вилсе çĕрнĕ хыççăн,
Пирĕн ĕç кăкăрĕ хăпарать.
Ак ĕнтĕ, тăван, пăх, кăтруçăн
Чăваш яч те епле ыткăнать.

Ыткăнтăр-ха, тăван, ыткăнтăр-ха
Хамăр тăван ячĕ тĕнчене!
Çакă юррăн сасси ян кайтăр-ха,
Савăнтарăр ĕçчен чĕрине!

1926

## ÇАМРĂК СĂВĂÇСЕНЕ ПЕХИЛЛЕСЕ

Çамрăк ĕмĕрĕме илем кӳме
Çитĕнетĕп-ши-ха эп, айван?
Алла пул сан эсĕ, çĕрĕк хӳме,
Ман вут-хĕме ан чар, ишĕл ан!

Алла пурнăç сăввин тĕп миххине
Туртса салтса часрах сăвăлас,
Илей кӳрен кĕввĕн чăн çӳпçине
Ярах уçса ярса тек юрлас.

Янтăратас пурнăç ыр юррине
Савăнăçлă ĕçпе вартарса,
Телей парас ĕçĕн чăн чурине
Юрлатăр вăл сасне хăпартса.

Çамрăк ĕмĕрĕме илем кӳме
Çитĕнетĕп-ши-ха эп, айван?
Тытăнасах апла сăвă сӳме
Хастарлăхпа çамрăк чĕр вăйран!
1926

## УТĂ ÇИНЧИ ИР

Чипер хĕрсемпе
Тек хавхаланса
Акă çитрĕмĕр

Халăх çаранне.
Чăшăл та вăшăлт
Лапаткаласа
Кăларар çаван
Вутлă хăватне.

Çĕкленсем, вăй-хал!
Ыткăн тилмĕрсе
Сарă кайăкăн
Ирĕк сассипе.
Чашлаттар, çавам!
Курăк хирĕлсе
Юлтăр пĕр енне
Касси-кассипе.

Атьăр-ха, хĕрсем,
Йĕрĕ йĕкĕтсем,
Сывлăм шăрçине
Типиччен сăвар.

—Кам вăл хыçалта?
Петĕр, хĕтĕртсем!
Ху савни пулсан —
Хă(вă)нтан ан хăвар!

Ыткăнса пырса
Вăйлă çарана
Хыртаратпăр çеç,
Çÿçкасуçă пек.
Паккус вĕçĕнче
Темшĕн ак мана
Савнă тус çиет
Шухă куçĕпе.

— Вăхăт çук чухне
Ан пăх, ан астар!
Çитĕ кĕркунне,
Çитĕ ак улах.
Вара тин ун чух
Куçупа кастар,
Савăнса вылях,
Савăнса кулах.

Халĕ çиçтерер
Çамрăк вăй-хала.
Пĕрĕхер илем
Аслă çарана.
— Эй, Иван-пăван,
Ватă мĕн калать!..
Вăркăнтар, Иван,
Çутă çавуна!

Çăмăл та хастар
Хĕр-йĕкĕт кулли
Ирĕк те хавас

Ярӑнса тӑрать.
Паккус ҫӗкленет
Кӑмӑл пек тулли,
Ҫамрӑк ывӑнмасть,
Ҫамрӑк ҫунтарать.

Хӑпарать хӗвелӗ
Пайӑрка ярса,
Шӑрататть сар кайӑк
Ирхи юррине.
Хӑнӑхнӑ ӗҫ халӑх,
Пӗр хӗрсе кайсан
Нихӑҫан туймасть вӑл
Канлӗх пуррине.

Канлӗх унӑн — пурлӑх,
Канлӗх ун — ӗҫре.
Вӑхӑтра ӗҫлетпӗр,
Вӑхӑтра канар.
Эй, ҫӗклен, вӑй-халӑм,
Сулӑн ҫивӗчрех!
Уй-хирти тивлетшӗн
Ҫулӑм кӑларар!

1926

---
Сиктермерӗн мана кӗленче сӑпкара,
Макӑрсан пыл хумарӑн тута-ҫӑвара.
Анчах сансӑр пуҫне, ыр ҫӗршывӑм,
Тӗнчере чи хакли тек пур-ши вӑл?..

Акӑ савнӑ Пӑла, вылянать-ҫке тек,
Чӗр вӑйне чӗреме иксӗлмесӗр парать...
Ак чечен сад пахчи, аппан шур пирӗ пек,
Ҫурхи кун шуралса ыр шӑршне вӑл сарать.

Ял хӗрри укӑлча. Симӗсленнӗ калча
Хӗвелпе пӗрлешсе йӑрӑм-йӑрӑм юхать.
Сыв-и, ватӑ юман! Кунӗпех ача-пча
Сан туйру айӗнче туй тӑвать, ҫуйӑхать.

Ҫут тӑванлӑхӑм! Пар аллуна
Сан патна савӑнса таврӑнан ывӑлна.
Ӗмӗтсен илемне, шухӑшсен тупсӑмне
Вӑл санра ҫеҫ шырать, ыр ҫӗршывӑм-анне!
1926

ЯЛКОР СӐВВИ

Эх, тӗрӗс тусӑм,
Ҫивӗчӗ перо,
Пирӗн вӑй — юхӑм,
Эпӗр чӑн герой!

Эпĕр иксĕмĕр
Ялăн хăй çути,
Ялăн вĕçĕмсĕр
Сыхлакан йытти.

Пирĕн вăй, çутă, —
Тĕттĕме сирет,
Ирсĕре хытă
Вĕтĕлентерет.

Ман куç-пуç ĕçлет —
Ял тавра йĕрлет;
Сан вĕçӳ — вĕçлек
Шухăша тĕрлет.

Пирĕн пулнă ĕç
Хаçата вĕçет;
Акă ĕнтĕ кĕç
Хай тăшман пиçет.

Пăх, ак эрнерен
Пирĕн тăшман çук.
Вара тĕрмерен
Вăл хăтăлас çук!

Çапла тасатаç
Йрсĕрлĕхсене!
Çапла вĕт çăваç
Хамăр ялсене!

Эх, тĕрĕс тусăм —
Вĕçлеке перо!
Пирĕн вăй — юхăм,
Эпĕр чăн герой!

1926

## САЛАМ ШУПАШКАРА

Шупашкар, Шупашкар — чăваш чĕри,
Ан ӳпкеле халĕ эс мала.
Акă эп сан патна ĕнтĕ юри
Килтĕм халĕ пĕрре хăнана.
Шупашкарçăм, эп сан ятупа
Кӳтĕм чĕрĕ чунлă пĕр салам,
Вăл салама санăн хăватупа
Тинех ĕнтĕ тĕплĕн эп калам.
Вăл ман хир пурлăхпе çирĕпленсе
Атăл хумĕпеле кĕрешрĕ,
Вăрман илемĕпе сĕткенленсе
Çил çунатлă пулса вĕçейрĕ.
Ак халь сан умăнта вĕçет вăл кар!
Тытах ăна таса кăмăлпа.
Татах эпĕ, савнă ыр Шупашкар,
Килтĕм тепĕр кирлĕ çăмăлпа.

Хăвăн хĕрсе тăран чĕрӳпеле
Уç халь манăн сивĕ чĕлхеме,
Вара эп те тинех хĕрӳпеле
Янтăратăп кĕмĕл чĕлĕхе!..
1926

ÇĔНĔ ÇĔРЕЛЛЕ

Аслă вăрман темшĕн хурлăхлăн
Тек ĕсĕклет паян йывăррăн.
Тĕнĕл кайăк сасси хырлăхран
Илтĕнет хăлхана хаяррăн.

Ах, мĕншĕн-ши эпĕ шикленеп? —
Çурăм тăрăх сивĕ хыпашлать.
Тен, инкек пулать-шим, пĕлмесп эп,
Пуçăм тулли шухăш тек ташлать.

Акă Вăрмар станци ман умра
Кĕрлет, шавлать тăван чăвашпа.
Ак пуйăс та çитрĕ Мускавран,
Çухăрчĕ вăл çитнĕ хаваспа.

Анчах час чарăнчĕ савăнма, —
Хупăрланчĕ шурă тĕтĕмпе.
Хуйхăллă чăвашсем ав ларма
Хатĕрленеç унта тĕтхĕмпе*.

Вакун алăк часах яр! турĕ...
Макăру, кăшкăру тапранчĕ...
Станцăри чăваш мĕнпурĕ
Вакун патне пырса капланчĕ.

Ма макăраç вĕсем çав тери,
Ма ӳпкелеç кунти уй-хире?
— Сыв пулăр, каятпăр! — тет пĕри.
Каятпăр инçетри Çĕпĕре.

Чăваш çĕршывĕнчи лăс вăрман
Кашлать епле хуйхă-суйхăллă.
Хăй илемне курса савăнман
Чăвашсене пăхать хурлăхлă.

Çӳлтен шăван тĕксĕм пĕлĕтсен
Ăçта-ши ертсе пыран тӳр çулĕ?
Çакă чăваш çынни-тăвансен
Ăçта иртсе кайĕ-ши кун-çулĕ?

Чашкăрса тапланă пуйăс та
Тапратрĕ хăй вăйне ерипен.
Чăваш чунне сиссе хуйхăпа
Мĕкĕрттерчĕ пĕтĕм чĕринчен.

1926

## ТĂВАН ÇĔРШЫВА

Çĕршывăм, çĕршывăм, каллех эп санра.
Хĕрӳллĕ ыр юррăм шăп саншăн янрать.

Кала-ха, çĕршывăм, кала-ха мана —
Куратна эс манăн хастарлă чуна?

Пĕлетне, сисетне — ман çамрăк чĕре
Сӳнет пулĕ ĕнтĕ вăл саншăн йĕрсе...

Туятна? — Вĕт эпĕ тăван ывăлу,
Сана тасатакан чăн ырă çăлу!

Сана чăн чĕререн ялан юратса
Пурнас теп чĕлхемпе ĕмĕр йăпатса.

Тарас çук инçе эп санран ют çĕре,
Нихçан та саваймĕ юта ман чĕре.

Ахаль мар тăванăм — сăвăç Хусанкай —
Каларĕ те татрĕ: «Юта эс ан кай!»

Апла эс, çĕршывăм, пилле ман чуна,
Савса çитĕнтер-ха тăван ачуна!
1926

## ТĂВАН ХАÇАТА

Çĕршыв эшелĕ, илем тӳлемĕ
Пулса тăратăн эс, хаçат.
Чĕрем киленмĕ, вăй-хал тӳсеймĕ
Сана памасăр чыслă ят.

Вăй чыс час пулĕ, кăмăл сан тулĕ,
Чапу вĕçейĕ çĕршыва!
Часах тасалĕ пулхăр* йăх çулĕ,
Сăну та çапĕ чĕр йыша!

Çĕршыв эмелĕ шăп эсĕ! тейĕç
Тинех сывалнă пур этем.
Хăйма пек юхĕ тăван хирте ĕç,
Тăван та пулĕ хир-йĕтем!

Вăрманăн, хирĕн чĕл чĕлтĕртетрĕ
Тин шерпекленнĕ ыр сĕткен,
Эмеллĕ юрă вĕл! вĕлтĕртетрĕ,
Чĕлхе те пулĕ вĕçекен.

Шансах калатăп, тăван хаçатăм,
Эс çеç чăвашшăн — утаман!
Пире чăн пурнăç çине куçартăн,
Эс çеç сас патăн юрлама.

Çунать чĕремĕн хĕрӳ вучахĕ,

Унта эп хутăм вут-ама!
Юрлам халь эпĕ — пулхăр йăх чапĕ,
Сана ĕнентĕр утаман!..
1926

## ХĔРӲЛЛĔ САЛАМ

Хĕлхемлĕ кĕвĕллĕ чи ыр сăввăма
Тивлетĕн хисеплĕ паян кун чаплать.
Паян кун — çĕнелнĕ чуна çăвăнма
Сĕткенлĕ çăлкуçĕ шăп маншăн тапать!

Хастарлăн, тăвăллăн тинех ĕнтĕ эп
Халавлă, илемлĕ çĕнĕ чӳк чӳклеп,
Октябрь ялавĕн тĕсне çĕнетеп —
Ăна хам чĕремĕн юнпе эп чӳхеп!..

Чĕр çамрăк — хастарлăх, чухах эс паян,
Октябрь илемлĕ тĕс кӳтĕр сăнна,
Хуланăн та ялăн сас кайтăр ян-ян, —
Ĕç халăх уявĕ мухтантăр чăнах!

Октябрь илемĕ çуратнă мана, —
Епле-ха ман уншăн шеллес чăн сăвва?!
Сисетĕп, туятăп: çак ыр самана
Чĕлхемшĕн çаврайрĕ чăн ырă йăва.

Кунран-кун хĕрӳллĕн ӳсет вут-хĕлхем
Хисеплĕ, кӳрнеклĕ çак ыр йăвара.
Тĕнченĕн тĕрекĕ — Хĕрӳллĕ Хĕлхем*
Сĕткен ярать манăн чĕлхе-çăвара.

Хĕрӳллĕ Хĕлхемĕн тĕрĕс хӳттинче
Сăваплăн паян кун йăлтах тасалам!
Юрлатăп эп саншăн, пуяс ыр тĕнче,
Октябрь тивлетшĕн хĕрӳллĕ салама!..
1926

## УЯВ

И лапка-лапканăн
Лăпкă юр çăвать,
Çĕр çине чăлт шурă
Кăкăрлăх çакать.
Тарлă, йăлăхтарнă
Канăçсăр çăва
Савăнса ăсатнăн
Сиккелет чакак.

Сарлака йăмранăн
Шилĕкĕ çинче
Чавкасен шăй-шайĕ
Çуйăхать пĕрмай.
Калăн, шурă вăхăт,

Калăн, шур тĕнче
Килнине чыслаççĕ
Сăрнайпа палнай.

Катан пир пĕркенчĕк
Уртнă çӳллĕ ту,
Ун тавра тухьяллă
Яхтă-чăрăшсем.
Калăн, хĕр сăрийĕ,
Калăн, çĕнĕ туй
Хускатма шутлаççĕ
Пĕлĕш-тантăшсем.

Тунсăхлă хăна пек
Пăхкалать хĕлле,
Куç хĕсет ачашшăн,
Кулкалать япшар.
Эх, кăмăлăм, кăмăл,
Кăмăлăм мĕнле!
Вăл паян çĕн юр пек
Тап-таса, шап-шар.

Эп выляп-кулатăп —
Çĕн вăхăт паян,
Савăнап-юрлатăп —
Паян кун уяв.
Ак халавлăн çитрĕç
Юрласа ян-ян
Хĕллепе Октябрь
Паянхи туя.

Ярапине янă
Савăк тĕнчене
Хĕрлĕ тĕс хастарлăн
Çавăрса илет.
— Эй, тухсам, ĕç çынĕ,
Тух, ялав чĕнет!
Санăн çеç паян кун
Илмелле тивлет!

Çиçĕмпе шăратнă
Пирĕн йăласем
Çимĕкрен илемлĕ
Сĕрентен чипер.
— Эй, кĕрле, ĕç халăх!
Ташлăр, ялавсем!
Паян кун пĕр харăс
Вăйсене виçер.

«Интернационале»
Хаяр та йăваш,
Тапхăр-тапхăр тарăн
Çывлатса илет:
Ăншăртран сывалнă
Пирĕн пек чăваш

Паян кун туяннă
Танлăхлă тивлет.

Савăн, хапрăк-савăт!
Савăн, аслă хир!
Çĕнтерӳллĕ савнăç
Хулара, хирте.
Çак таса çĕршывăн
Хуçисем эпир,
Çак тĕнчен йĕвенĕ
Паян кун пирте!

И лапка-лапканăн
Лăпкă юр çăвать.
Ял хушши йăл-ялăн
Ялавпа çунать...
1926

ТУПА

Ешĕл те сенкер уй-хирĕм —
Чиперленнĕ асамат!
Тупа çăкăрне эп çирĕм,
Сăмах патăм çак самант:

Саншăн, саншăн, пурлăх амăш,
Эп уçатăп кăкăра!
Иртнисемшĕн тек хурланмĕ
Сассăм — çутă шăнкăрав.

Кам пĕлмест-ши, кам тӳсмен-ши
Касамат пек пурнăça?
Ман аттен те тыр ӳсменшĕн
Куçĕ шывлă пулнă çав.

Эс халь, хирĕм, çĕнĕленнĕ.
Эсĕ татнă касмăкна.
Сарă кайăк та иленнĕ
Шур чечеклĕ ясмăкна.

Ахаль мар-тăр ват аннемĕн
Супнă пичĕ тĕсленет.
Ахаль мар янравлă çемĕ
Кĕчĕ манăн кĕслене.

Эй, уй-хирĕм — тараватăм,
Мĕн калам? Мен сăвăлам?
Эсĕ çеç шăнăçтаратăн
Ман капланнă кăмăла.

Ир-ирех, хĕвел чаршавĕ
Хĕрелсе çĕклениччен
Тапранать хĕрӳ ĕç шавĕ
Сан тулли чĕркӳ çинче.

Аванса выртать сан урлă
Хĕвел çулĕ — асамат.
Çăкăрпа тупа эп турăм
Çак пархатарлă самант:

Сан тивлетшĕн, пурлăх амăш,
Эп уçатăп кăкăра!
Яланах, йĕрке пуçламăш,
Пулăн манăн săвăра!

Эсĕ çеç хăват паратăн
Ĕлкĕрсе ӳсен хала.
Эй, уй-хирĕм — тараватăм,
Яланах эп санпала!
1926

ÇАМРĂКЛĂХ

Çамрăклăх — чаплă ят,
Чап ун кивелмĕ те чакмĕ.
Çамрăк шеллемĕ вăя.
Вăй ун — Вулканăн вучахĕ.

Чăнкă, сулмак кăкăрта
Çамрăк чĕремĕр — турбина.
Çамрăк ӳте пăхăртан
Тӳсĕм хăвачĕпе хывнă.

Çамрăклăх — çут асамат,
Çамрăклăх, теççĕ, çиçĕм,
Çиçĕм тĕнче касаймасть,
Çамрăклăх касĕ те виçĕ!

Çамрăклăх! Юррăм ман
Ĕмĕр санпа хĕвеллентĕр.
Кам хăй çамрăк пулман —
Çавă мана ан ĕнентĕр!
1926

КАНИКУЛРА

Ак эп хуларан, савнă тусăм,
Килтĕм-çке юриех сан пата.
Эх, халь эс ман умра тек ан усăн,
Именсе ан чĕнсем ман ята.

Эх, йĕркен вĕренсе халь эп турăм
Çамрăксен кăмăльшĕн ыр ăс-хал!
Савнă тус, маншăн эс — çутă туррăм!
Çитĕ-ши саншăн ман ăраскал?

Вут чĕрем саншăн ак татĕ калĕ
«Юратап, юратап!» теейсех.
Сив чĕлхем саншăн çеç вăл якалĕ,

Юррăмра вырьăн çав тек эсех.

Ма усан эс пуçна, ма йĕретĕн,
Мĕншĕн эс тăкан-ха куççульне?
Халь йĕмеç! Пĕлместнем — ав ĕретĕн
Салтнă пусмăр тĕввин кун-çулне.

Сан чĕрӳ, сар пике, ма ĕненмĕ
Вут чĕрем çумĕнчи сăмаха?
Нимĕнле тăшман та халь çĕнеймĕ! —
Пулăп саншăн юлташ хамах ак.

Тухăп эп вĕренсе чăн хĕрӳллĕ,
Выляса, савăнса çĕн уйла.
Туйăм ман пулас çук хĕр йĕрӳллĕ,
Сана эп илепех çĕн туйла!

Ма усан эс пуçна, ма йĕретĕн,
Мĕншĕн эс тăкан-ха куççульне?
Халь йĕмеç! Пĕлместнем — ав ĕретĕн
Татнă пусмăр тĕввин кун-çулне.

Куççульне шăлчĕ те ак чуптурĕ:
«Юратсах юратап!» — тет мана.
Уйăх та лерелле ĕнтĕ шурĕ
Çакăнса чуптума юмана.

Йышлă çут çăлтăрсем пит ырларĕç
Юратуллă, эх, яш ĕмĕре...
— Сыв пулсам эс, савни! Ман ыран ĕç
Çуранах утасси Чĕмпĕре.
1927

---
Çĕршывăм, çĕршыв, мĕн кирлĕ сана?
Мĕскер эс ыйтатăн? Мĕскер ăмсанан?

Пуянлăх, хаваслăх е ĕмĕрлĕх ят,
Е иксĕлми паттăр асамлă хăват?

Кала эс, çĕршывăм, кала эс пире:
Туятăн-и пирĕн хĕвеллĕ ире?

Туятăн-и эсĕ: çак пирĕн чĕре —
Пĕр саншăн тапать вăл, пĕр саншăн хĕрет.

Чи сиплĕхлĕ, хаклă, таса çăлкуç пек
Сан сывлăш-хăватшăн пулатпăр пуçпех.

Хĕр хальлĕн тасалăх санра упрама
Çап-çамрăк чĕремĕр-çунан вут ама.

Асаплă ĕнерĕн палли-çĕввисем —
Паян кун çухалĕç, якалĕç вĕсем.

Юханĕ-шăтанĕ е ирсĕр кĕсен
Нихçан пусмăрлаймĕ ванми никĕсе.

Çĕршывăм, çĕршывăм, мĕн кирлĕ сана?
Мĕскер эс ыйтатăн? Мĕскер ăмсанан?

Е пурлăх, хаваслăх е ĕмĕрлĕх ят?
Е иксĕлми паттăр асамлă хăват?

Вăл пулĕ, çĕршывăм, вăл пулĕ пурте!..
Чăн аслă вут амăш хăвачĕ пирте!
1927

---

*Петĕр Хусанкая*

Ăшăм çунать,
Хыпать вăл паян ман...
Ăçта чикес
Тăр ешĕл пуçăма?
Вăл вĕт тӳсет...
Чĕремçĕм, эс ан ман
Таçта ютра
Аташнă тусăма!
Епле тӳсес
Çак чиксĕр хурлăха?
Е куççульпе
Ярам-и юрласа?
Ăçтан юрлан!
Чĕремçĕм — хурлăхан,
Паян тытать
Вăл типĕ ураса.
Тӳсет ман тус,
Тӳсет вăл çич ютра...
Çыврать те пуль
Хӳменĕн хыçĕнче...
Тăван çĕршыв —
«Чечеклĕ çĕн утрав» —
Туй халĕ эс —
Мĕнле вăл çут тĕнче!
Тăван çĕршыв,
Çĕнелнĕ теç сана.
Ăçта сăну,
Çĕнелнĕ сан сану?
Эс çĕнелмен!
Сан пуçлăх — тăмана.
Пĕтсех пĕтмен
Сан ирсĕр сăттану!

Тăван çĕршыв,
Чăн ывăл ăçта сан?
Ху ылтăнна
Пĕлмерĕн упрама.
Чĕппӳсене

Куллен-кун çухатсан
Вара мĕнле
Пулатăн ыр ама?
Шеллеп сана,
Çĕршывăм, эп чунтан.
Сан хуçусем
Халь тухнă çăхана!
Капла пулсан
Чĕр Вилĕм-каччу та
Ак сан пата
Час килĕ хăтана.

Чăн чĕлхӳне
Çураçĕç çăханне...
Çĕнĕ çынсем
Çуратĕç «вырăса».
Ак çавăнпа,
Çĕршывăм — ман анне,
Эп хыт тытап
Паян кун ураса...

Илтсем, тăван,
Ман йывăр сассăма.
Ан ӳпкеле,
Вăл ирсĕр пулсан та.
Ан каласам:
«Эс ешĕл, эс ăнман!» —
Ĕмĕр манми
Тăванăм ХУСАНКАЙ!

---

*Ст. Леонтьева*

Йăлттам хĕвел чупать, ури ун сакăл.
Ăна арман кӳлесшĕн пĕр мелник...
Паян, тăван, тултартăм эп вун саккăр,
Паян тăвап эп чаплă менелник.

Паянхи кун тĕттĕм ялта хĕрарăм
Мана кун-çул парасшăн йĕнĕ тет...
Хăй çĕршывне тӳленĕ çав вăл парăм, —
Ачи халь ун, эх, юрă çĕнетет!

Куççуль шывпе анне текех чӳхерĕ,
Чĕри юнне пиллерĕ вăл мана...
Татах калап: чĕлхем çинчи йӳç эрĕм
Тăре пулса ак тутлă лиманат!

Çунатлансах вĕçем-ха эп, тăванăм,
Вĕçем часрах çĕршывшăн юрлама!
Киввишĕн мар, — йăлхах, йăлтах вăл ваннă,
Çĕнĕ çĕршыв халь маншăн Утаман!

Йăлттам хĕвел кулать, çул ун хап-такăр,

Унтан арман хăвасшăн пĕр мелник...
Паян, тăван, тултартăм эп вун саккăр,
Паян, хăвап эп чаплă менелник.

Паян савнап, паян ташлап!.. Хыт хурлăх
Мана халь тин çураçмĕ ват кине!..
Салам сана Вăрнар вăрманĕ урлă,
Тыт-ха чĕлхен шерпеклĕ* куркине!..
1927

ТĂВАН ЧĔЛХЕНЕ

Шанап, чĕлхемçĕм, ĕненетĕп
Сан чи тивлетлĕ ĕмĕтне,
Çунатлă пултăм — вĕçĕнетĕп
Ĕмĕт сĕткенĕ çĕнетме.

Çамрăк чĕремĕн вут хĕлхемĕ,
Чĕлхемçĕм, саншăн ялкăшать.
Тин çеç вăраннă чăн чĕлхемĕм
Ĕнтĕ хĕрӳллĕ чалкăшать.
Хĕскĕч кун-çулĕн мур ĕмĕрĕ
Чылай вăл çирĕ хăватна...
Çапах чăн сиплĕх сан пĕтмерĕ,
Усал тивмерĕ сăпатна.

Тинех тивлетĕн ырă ячĕ
Ярса та тытрĕ ирĕкне!
Çамрăк поэтăн чĕр хăвачĕ
Çăвĕ чĕлхенĕн кирĕкне!

«Килсем, килсем, чăваш поэчĕ!» —
Теетчĕ Çеçпĕл куççульпе.
Чĕлхем, вăл саншăн, саншăн йĕчĕ,
Уйрăлчĕ саншăн кун-çульпе.

Татах калам — вăл пурнăç иртрĕ,
Йĕрӳсем юлччăр тĕлĕкре!
Ĕнтĕ, чĕлхеçĕм, сана витрĕ
Çамрăк çар. Эс халь чечекре!

Ӳссе пыран çамрăк вĕçлейĕ
Чĕлхен тивлетлĕ илемне —
Калатăп эп — Митта Ваçлейĕ —
Çыртса чĕлхенĕн тӳлемне!
1927

ÇУРХИ КĂМĂЛ

Çамрăкланнă çут хĕвелĕ
Тараватлăн кулкалать.
Уртрăм ятăм çĕр пĕрмеллĕ
Ешĕл симĕс çĕн халат.

Тухрăм утрăм. Кăмăл тулчĕ.
Чĕр вăй килнĕ Сĕвене.
Сивĕ хĕлĕн каскăн учĕ
Туртнă татнă йĕвенне.

Урăм-сурăм аннă халăх
Чĕнтĕрленĕ Чĕмпĕртен.
Пăр хускалнă. Уçнă алăк.
Çурĕ тытнă чĕлпĕртен.

Çут хĕвелĕн тумĕ капăр,
Сар хĕр евĕр шупăрпа:
Чуптăвать вăл тапхăр-тапхăр
Кăвакарнă шур пăрпа.

Эх, кăмăлăм, шухă кăмăл,
Çак шыв евĕр хумханать!
Е вĕçесшĕн вăл çăп-çăмăл,
Е ўкесшĕн хăтланать.

Пĕрех хут, ассан — асам-и,
Тулхăртам-и вăй-хала?
Çут тĕнчен çурхи асамĕ
Тăванланчĕ манпала.

Эй, хĕвел! Çурхи ытамăм
Пĕр сана çеç хапсăнать.
Эй, хĕвелĕмçĕм!
Тытам-и,
Пăчăртам-и эп сана?

Халиччен хĕрле упраннă
Чăн таса телейĕм ман
Кĕрлесе тăтăр
Тапраннă
Пар пекех паян!..

Эх, атьсемĕр, каçарсамăр, —
Шухă шухăш ман пуçра...
Каçарсамăр та чарсамăр
Хăвăр аскăн сăвăçра.
1927

---
Паян эпĕ хĕпĕртерĕм,
Çăл шыв сапрăм йăлăмра.
Сив чĕремĕм — хытнă эрĕм —
Халь шерпетлĕ сывлăмра!

Çамрăк юнăм ак ташларĕ
Çепĕç туппăль çуппипе.
Эп халь — пулхăр чăн яш арĕ -
Ак сикетĕп пит чипер.

Ĕлĕк йăшнă хал-çунатăм

Халь хӗлхемлӗн вӑл хыпать...
Акӑ кӳчӗ ҫак кун Атӑл
Маншӑн чаплӑ ыр хыпар.

Хыпар кӳчӗ Аслӑ Атӑл:
Килчӗ, терӗ, тӑвану.
Мана ҫыхнӑ тӑлӑ, татӑл,
Ирӗк пуҫӑм, аван ут!

Хыпар ячӗ паттӑр тусӑм,
Тин чӗремҫӗм хыт тапать.
Чаплӑ паттӑр капкӑн хуҫнӑ,
«Сыв пул, — тенӗ, — Асхапат!..»

Паян эпӗ ҫунат хыврӑм,
Ҫӑл шыв сапрӑм пӗлӗтре.
Ҫамрӑк пуҫшӑн ӗнтӗ йывӑр
Пулмӗ сӗрӗм-тӗтӗре.

Кив поэзи тӑмлӑ, — вантӑр!
Пире кирлӗ вут чӗлхи!
Кӗмӗл лира эс, тӑванӑм,
Эпӗ — ҫиҫӗм йӗс ҫилхи!
1927

---
Тавралӑх шуҫӑмпа хӗрелнӗ,
Йыхравлӑн янӑрать кӗсле.
Паян поэт кӑвар чӗреллӗ,
Чӗлхи вылять ун ҫут хӗҫле.

Тӑван ҫӗршыв — мухтавлӑ Улӑп
Поэт чунне пӑхӑнтарать.
Тӑван чӗлхе — ем-ешӗл улӑх —
Поэт унта халь хӑнара.

Юрла, поэт, ташла та ҫуйӑх!
Йӑпат хӑватлӑ Улӑпа.
Упаленет антранӑ уйӑх, —
Ҫапса ӳкер ӑна чулпа!

Кама пит кирлӗ пуль ҫав уйӑх?
Ун хакӗ халӗ йӳн ҫӳрет.
Нарастаран салху та хуйӑх
Мещен хӗрсемшӗн вӑл кӳрет.

Халь пултӑр купӑс е сӑрнай, —
Ташша кӗтет ҫӗршывӑн уйӗ.
Ҫак аслӑ ҫимӗк ҫитнӗ май
Пуҫланмалла чӑвашӑн туйӗ.

Поэт тени пит чӑрсӑр ҫын вӑл,—
Мӗскер шутлать — ҫавна тӑвать:
Салхуллӑ уйӑх — сӑнсӑр символ -
Ак кутӑн-пуҫӑн ывтӑнать.

Поэт хӗҫпе вӑльт-вальт ухать...
Е мыскара ку, е ку чудо —
Ӳкернӗ уйӑхран ҫап-ҫутӑ
Янравлӑ ҫӗн сӑрнай тухать.

Кам ҫакӑ тӗнчере асамӑҫ,
Кам ӑрӑмӗ темрен хаяр, —
Ҫавна поэт тесе ӑмсанӗҫ,
Унтан ытла никам та мар.

Поэт ак тытрӗ сӑрнайне...
— Кӗрле, пӑлхаварлӑ сӑрнайӑм!
Ҫӗнӗ ҫӗршывӑн ҫӗн туйне
Чи чаплӑ хӑна пек эс кайӑн.

Ташла, юрла, ҫӗршывӑн уйӗ,
Таптат тӗп пулнӑ авална!..
Паян сикет чӑн паттӑр туйӗ,
Хастарлӑ Улӑп авланать.
1927

---
Тӗнчере хӗрӗх те пӗр илем теҫ, —
Пурте пирӗн пулӗҫ вӗсем.
Ахаль мар-тӑр хӗр хальлӗн иленчӗҫ
Пире юрӑ кайӑкӗсем.

Кам ытамӗ ытамлӗ те илӗ
Ҫакӑ аслӑ ҫӗршыв чиккине? —
Е асар та писер ҫавра ҫилӗ?
Е вӑл тивӗҫ поэт чӗлхине?

Пурте, пурте пӗртен-пӗр тивӗҫ
Сӑввӑн ылтӑн чӗлхи-ҫӑварне.
Ун хӑвачӗ стихийӑран ҫивӗч,
Уншӑн пур вӑй-хӑват та — парне.

Тусӑм, тусӑм, ҫакна пӗлнӗ хыҫҫӑн
Уйрӑлатпӑр тесе ан кала!
Ирӗкри телее ывҫӑн-ывҫӑн
Ывӑҫланӑ эпир санпала.

Пире аслӑ ҫӗршывӑн илемӗ
Тӗне кӳртрӗ ҫурхи телейре.
Ҫавӑнпа юррӑмӑр иксӗлеймӗ,
Пирӗн юрӑ ҫӑлкуҫ евӗрлех.

Аслӑ улӑхӑн ешӗл хускавӗ
Хумхантарнӑ пире ачаран.
Ҫавӑнпа юрӑра унӑн шавӗ,
Пирӗн юррӑмӑр — хир те ҫаран.

Сар чечеклӗ вӑрман аслӑ уйӗ

Тарӑн шухӑш сӗнетчӗ пире.
Ҫавӑнпа чӗрери ҫамрӑк туйӑм
Хӗмленсе амаланчӗ ирех.

Чӑн тӑванӑм! Янравлӑн та уҫҫӑн
Такмаклар-и паян санпала?
Ҫак тӗнчен тупсӑмне тупнӑ хыҫҫӑн
Уйрӑлатпӑр тесе ан кала!
1927

## СӐВАПЛӐ КӖТЕС

Хула хӗрри улах. Сӗве йӑвашшӑн
Пахча ҫуммисемпе иртсе каять...
Ҫак лӑпкӑ кӗтесре тӑван чӑвашшӑн
Ҫуралнӑ ӗлӗк чух пӗр ҫамрӑк ят.

Ак ун кӗперӗ, вӑл юратнӑ вырӑн,
Ак вӑл час-час таяннӑ ват йӑмра.
Паян та вӑл кунта ҫӳрет пек ыррӑн,
Тӑрать пек сыввӑн умӑмра.

Ун лӑпкӑ куҫӗсем йӑл-йӑл тӑваҫҫӗ,
Ун сӑнӗнче — те хурлӑх, те телей...
«Мӗнле пурнан? Мӗнле ҫӗршыв хӑвачӗ?
Ман шӑллӑмсем нумай-и, Ваҫилей?» —

Тесе ыйтассӑн тӑрать пек поэтӑн
Шухӑшӑмра ҫӗкленнӗ ӗмӗлки...
— Аван, манми тете. Аван, — теетӗп. —
Сывлать чӑвашӑмӑр, сывлать чӗлхи.
Ҫак пирӗн ӳсӗмри чӑваш этемӗ
Иртме шанать чӑн пурнӑҫ тӗпелне.
Ҫитет пире, ҫитет — тертленнӗ,
Лаххан таврашӗнче ҫитет-тӗр йӗпенме!

Чӑвашӑн ӑнсӑртран сывалнӑ куҫӗ
Культура кил-ҫуртне пӑхса илет.
Телейлӗх тупсӑмне хӑех вӑл уҫӗ,
Хӑех туянӗ хӑй валли тивлет.

Эх, Константин! Пирӗнпеле пулсамччӗ.
Пулсамччӗ кӗрекере илем пур чух...
Анчах мӗскершӗн-ши нимле асамҫӑн
Сан ыйхуна сирме хӑвачӗ ҫук?..
1927

## «ҪАМРӐК ХРЕСЧЕНЕ»

Манра хал, вутлӑ хал,
Ҫамрӑк юн ҫиҫӗм пек!
Ҫапах эп пит кахал, —
Курӑр, тӗпсӗр йӗмпех!..

Эп кахал, пит кахал, —
Вутлă юн ĕçре мар!..
Ман вăя пит сахал
Çитрĕ çамрăк тымар...

Çамрăксен куçкĕски
 Пулăн, çамрăк хаçат!
Мана эс, куçкĕски —
Кахала сирччĕ чат!

Ырласам ман ĕçре,
Электрицă-хала!
Унтан тин эп вĕçсе
Илем кӳрĕп яла!

Хушрăм ак çил çунат, —
Халĕ эп кахал мар!
Ман сĕткен тин çунать...
Эх, ĕмсем, чĕр тымар!!!
1927

## УЛĂХРА

Куçăмсем умĕнче аслă улăх
Атăл евĕр сиксе ыткăнать.
Улăх, улăх!
Мĕн чул санăн пурлăх,
Мĕн чул ырлăх сана пăхăнать!

Улăх, улăх!
Хитре эс, ятуллă,
Ешĕл тум сан — савнин улачи.
Ахаль мар
Çав тери юратуллă
Сан сине куç хывать
Ял ачи.

Эп пĕлетĕп: татах чиперленĕн,
Капăрланăн, ыр улăх — анне.
Халь кашни хресченех:
«Эпир Ленин
Хушнă пек
Пурнар», — тет тăванне.

Çĕн этем пурнăçпа
Курнăçасшăн,
Вăл илесшĕн алла ĕмĕте.
Ĕмете çитерме
Пурнăç ашшĕ
Вырăнне халь суйланнă
Этем.

Ак сана та часах, ешĕл улăх,

Илем сырĕ çĕнелнĕ этем.
Килĕ санăн телейшĕн
Çĕн Улăп,
Чечекленĕ уй-хир те йĕтем.

Çавă Улăп — телей, вăл — пархатăр,
Вăл çунатлă йăлттам урхамах.
Эпĕ уншăн тахçан, тахçан хатĕр
Çамрăк сассăмпала юрлама.

Электрицăн
Кĕрен шурăмпуçĕ
Сана, Улăп — йăлттам урхамах,
Таçтанах тавçрать* улăх куçĕ,
Саламлать вăл сана тахçанах.

Эх, килсемччĕ часрах, хурăç Улăп!
Виçсе тух çакă улăх çĕрне!
Эп ун чух урăхла юрă юрлăп,
Мухтăп хурçă хăват ĕмĕрне.
1927

ПИРĔН ЭРТЕЛ

Ыр çĕршывăн чăн чĕлхишĕн
Пире кӳнĕ ыр ама,
Чыслă пурнăç чĕлĕхĕшĕн
Пехилленĕ юрлама!

Вут чĕлхемĕр ак вăратĕ
Ыйха кайнă пулхăра,
Хамăр халăх ыр ăратĕ
Хастарланĕ тулхăрса.

Эх, чĕлхемçĕм, — çирĕп хурăç,
Сана эпĕр чечеклер!
Сан тивлетшĕн имлĕ юрă
Ярать чаплăн ак Элкер.

Тепĕр лирĕк питĕ ирĕк
Юрлать саншăн кăшкăрса.
Ах, чĕлхеçĕм, ирсĕр кирĕк
Санран хырĕ вăл Ăрсай.

Кĕвĕленчĕ, илемленчĕ
Хастар çамрăк Ваçанкки,
Халлă юнĕ хĕлхемленчĕ,
Мĕкĕрттерчĕ чан çапки.

Вут чĕлхеçĕм — пыл чӳлмекĕ,
Сар кинле эс юсан-ха!
Тум сан чĕнтĕр — ун чĕмекĕ
Пулса тăчĕ Хусанкай.

Ыр сун чаплă йывăр ĕçшĕн

Шупуç харсăр çыннине!
Эх, пĕлетпĕр ырă тĕшĕ
Малтан çавă çинине.

Акă тепĕр çамрăк Çулĕç
Сарать вутлă çунатне,
Юррисем ун хĕмлĕ пулĕç, -
Чĕртĕç пулхăр чăн ятне!

Эп те халĕ çил çунатлă, —
Хама саншăн шеллеп-и?!
Çамрăк юнăм сăвăç ятлă,
Часах пулăп Шелепи!

Çак эртел вăл час вăратĕ
Ыйха кайнă пулхăра!
Пулхăр юрă ак шăратĕ
Çитти çитнĕ пурлăха!

1927

ЭМИГРАНТ

Яла çитрĕ пит хаваслăн
Урхамах пек пĕр пар ут,
Туртса кӳлнĕ хитрен, чаплăн
Çак, утсемшĕн тимĕр ут.

Пружиналлă трантас меллĕн,
Пит сикет-çке транк та транк!
Унта чаплăн, măн çĕмелĕн
Ларать таркăн — эмигрант.

— Эх, кала эс, ыр çын-ямшăк,
Епле тупрăн тимĕр хут?
Пулни ĕлĕк санăн шанчăк
Тытса тăма пĕр пар ут?

Эс кала, кала, ыр çыннăм,
Ку чăнах-и манăн ял?
Епле кун пек вăйлă чынлăн
Çиçет халĕ йăл та ял?

Çĕрнĕ шăршлă тăван ялăм
Халь ак чаплă, шăлт хула!..
Эй, телейсĕр, пĕтнĕ халăм,
Сисеймерĕн кун-çула!..

Хуçи кам-ши çакă пӳртĕн,
Капăр тунă вăл ăна...
Тăван ялăм, епле кӳртĕн
Мана — каскăн ывăлна?

Тĕнче касрăм, тĕл пулмарăм
Кун пек вăйлă улшăну!..

Эх, пулать-ши, юн тымарăм,
Кунта саншăн йышăну?..

Шурри майлă пултăм кайрăм,
Çирĕм çамрăк ĕмĕре...
Тинех эпĕ асăрхарăм,
Тин эп куртăм чăн йĕре!

Чĕререн эп тек ылхантăм
Большевизм Ăруçне*...
Тинех сисрĕм, тин тăнлантăм
Совет влаçĕ хурăçне!..

Хăйĕн аскăн ĕмĕрĕшĕн
Йĕрсе ячĕ эмигрант...
Терĕ ямшăк: «Ма иртнишĕн
Хурланатăн, макăран?

Ĕç çынни вăл халь тĕреклĕ,
Эсĕ сисрĕн тин ăна!
Кунта пурăн эс ĕретлĕ,
Ун чух пулăн тин хăна...»

Пружиналлă трантас меллĕн
Пит сикет-çке трант та трант!
Вăл йĕрет-çке чăн йĕмеллĕн...
Пуçне чикнĕ эмигрант.
1927

УТАМАН

Ахăрать, кăтăрать тинĕс шывĕ,
Темĕнпе тытăçать пĕрмаях.
Инçетре...
Инçетре...
Ах, мĕн-ши вăл?
Те — телейлĕ хĕвел, те — маяк?

Инçетре...
Инçетре...
Ах, мĕскер вăл?
Ах, мĕскер вутланать тинĕсре?
Нимĕн те мар ăна хум кисревĕ,
Сӳнтереймерĕ ăна нимĕскер...

Ак пырать тинĕспе вутлă крейсер
Хумсене ывăтан Утаман.
Шанчăксем ун вăйне хĕтĕртеççĕ,
Ун чĕрийĕ — çунан вут ама.

Ун чĕри тăвăлпа çирĕпленнĕ,
Ун чĕри тимĕр-хурăç татать.
— Эй, карап капитанĕ —
Ленин,
Каласам, миçе çухрăм тата?

Инçе мар,
Инçе мар
Пирĕн шанчăк!
Ав умрах çут маяк ялкăшать.
Тинĕс хумĕсем те ĕнтĕ шанчĕç,
Ватă тинĕс сывлать ак кăштах...

Вунă çул тинĕсре чаплă крейсер,
Вунă çул ыткăнать Утаман.
Шанчăксем ун вăйне хĕтĕртеççĕ,
Ун чĕриййĕ — çунан вут ама.

Самананăн пархатăрлă* ывăль —
Хурçăланă карап Утаман.
Халĕ урнă тинĕсĕн шывĕ
Час тапратĕ ăна пуççапма...
1927

---
Сыв пул, ирхи телейлĕ килĕ,
Вĕренӳре ирттернĕ ир.
Ӳстерчĕ Яковлев пехилĕ,
Кунта çын пултăмăр эпир.

Мĕскер паян кун парнелем эп,
Мĕнле телейлĕх ăмсанам?
Ирхи кунсем кăна илемлĕ,
Ирхи кунсем çеç — асамат.

Кăмăлăма çемçетрĕн эс те,
Лăпкă хĕр евĕрлĕ Сĕве.
Пурте тăван. Мĕншĕн — пĕлместĕп.
Пурне те хурăттăм хĕве.

Пурне те ирĕклĕ ытамăм
Хĕр пек ыталĕччĕ паян,
Малашне те рай, те тамăк,
Çавах хаваслăн пуç таян.

Паян кăна вĕт пурăнмаççĕ,
Чĕре ыраншăн та йĕрет.
Мĕншĕн çитес кун курăнмасть-ши?
Апла пул сан та пурпĕрех...

Апла пул сан та пурпĕрех...
(Çитес кунсемсĕр курăнсан та)
Илемлĕ çамрăклă ире
Кĕтсе эс, тусăм, урăх ан тар.

Чĕрем çапах çунса кĕлленмĕ,
Чĕрем илемлĕх ăмсанать.
Çапах малта
Шупка илем-мĕн,
Иртни —

Шенкерлĕ асамат.
1928

---
Сыв пул, юратнă шкулăм,
Сыв пул эс те, хула.
Куççуль тумланă куллăм
Ман темĕншĕн кулать?

Те савăнăç, те урăх
Мана малта кĕтет,
Анчах çĕнелнĕ юрă
Тур çырнă йĕкĕте.

Вĕрениччен — Ваçлейччĕ,
Халь ак пулап Митта.
Ан тив, пурте çилленччĕр
Вĕре пĕлмен йытта.

Вĕре пĕлмесп пулсассăн
Вĕрме те нимĕн мар.
Хăçан тупайĕ сассăм
Хам тенĕ çыннăма?..

Сыв пул, юратнă шкулăм,
Тăван кил пек хула, —
Куççуль тутаннă куллăм
Пĕр сирĕншĕн кулать.
1928

*А. Беляева*

Юлташлăхра телей иккен-мĕн.
Илем юлташлăхра кăна!
Сăвăланан чĕрем сĕткенĕ
Пĕр саншăн, саншăн сăрхăнать.

Ах, Шура, Шура! Шурĕ, шурĕ
Ирхи шур çамрăклăх пĕрле.
Ирхи кунсенĕн абажурĕ
Асамат пек пире тĕрлет.

Кунсем-çулсем çаплах шăваççĕ,
Юртаç кунсем çавра çилле.
Паян эс калăн: «Вася, Вася!
Сыв пул, тăванăм, Ваçилей!»

Сыв пул, сыв пул! Эх, Шура, Шура!
Хăçан ыталăп çĕнĕрен?
Санран ытла юлташăм урăх
Тупманччĕ эпĕ кĕçĕнрен.

Чи çывăх йĕкĕреш пек эпĕр
Ӳсеттĕмĕр вĕренӳре.

Çитес кунсен хавас хисепĕ
Тухман нихçан ĕненӳрен.

Паян унпа чĕрем сĕткенĕ
Пĕр саншăн, саншăн сăрхăнать.
Юлташлăхра телей иккен-мĕн,
Илем юлташлăхра кăна.
1928

КАНАШ

Выç вар кĕвви калан юрра,
Поэтăм, пăрахар.
Уксах ура вăйлă туйра
Ташлаймĕ вăрахах.

Кăвак пĕлĕтĕн чатăрĕ
Хĕвелшĕн уçăлсан —
Поэт, поэт, эс çав тери
Шӳтле, ан хуçăлсам!
1928

СЫВ ПУЛ, ХУЛА!..

Кунта тĕнче! Тĕнчен хум-шавĕ.
Кунта автобус — урхамах!
Хĕрлĕ хĕвел пек хĕвелçаврăш
Кунта никам та курманах.

Кунта этемĕн ăраскалĕ,
Этем кунта çех çын пулать.
Унпа — хир ывăль чун хавалĕ
Сана юратрĕ те, хула!..

Сыв пул, сыв пул! Эпир ак хатĕр -
Чĕнет пире тăван уй-хир.
Ăçтан халь курăпăр пархатăр —
Лăпланмасан хресчен хуйхи?

Хресчен кĕтет, кĕтет тахçан вăл
Хĕрсе туптаннă ывăлне.
Юрламалла ялта халь çамрăк
Хула хум-шавĕн калавне.

Пĕр ĕмĕт, пĕр сăмах паян кун
Çӳрет тек пирĕн патăрта:
«Епле аван — ялти тальянка
Сасса килсессĕн тракторпа!»
1928

ÇАМРĂК ПОЭТА

Эй, тантăш, тантăш,
Эс-им, эс-им
Мана саватăн, юлташлан?
Е саншăн юра астивес-им,
Е саншăн чаплăн эп ташлам?
Е иксĕлми çĕнĕ илемшĕн
Паян хушам-и сил çунат?
Чĕрем, чĕрем хыпсах çунать,
Мĕскер эп, тантăш, кĕвĕлем-ши?
Тĕнчеленет
Умра ав шуçăм,
Умра —
Хĕрелнĕ асамат.
Çынсем çинчен юрлам кăтруçăн,
Çавсем
Тимлеççĕ сассăма.
Ĕмĕр сӳнми тăван кĕтесĕн
Амалансах пырать кăвар.
Эй, тантăш, тантăш,
Эс-им, эс-им?
Тавай
Пĕр харăс
Сас парар!
1928

АСАМАТ

*Чăваш автономине*

Тĕнчене кисретсе аслати çĕхĕрсен,
Вăйлă тăвăл иртсессĕн тискеррĕн
Ĕмĕрхи ĕмĕрти хĕвел тухрĕ хĕрсе,
Тухрĕ çут асаматăн кĕперĕ.

Ытарса илейми куç тулли çĕн илем:
Асамат та çутă хĕвелĕм!
Эй, кама эп паян юррăма пехиллем,
Камшăн юррăм илемĕ çĕнелĕ?!

Асамат та, хĕвел те — пĕрле!
Тĕнчеленнĕ илемлĕх паян кун,
Таврипех юрă-сасă кĕрлет,
Таврипех — кĕмĕл саслă тальянка.

Çĕнĕ саслă тĕнче, çĕнĕлле сăн-сăпат,
Сенкерпе пиеленнĕ тăванлăх!
Халиччен те пулман сасăпа
Паян кун ман тăван аталаннă.

Ахаль мар-мĕн сăрнай ирсенче
Тимсĕлсе ăмсанатчĕ ирĕк.
Эй, тăван, юрруна кисрентер!
Кисрентер юрруна, аслă хирĕм!

Вылянать асамат умӑмра.
Асамат вӑл — ҫӗн пурнӑҫ ирӗ.
Асамат варрине ылтӑнран
Эп ҫыратӑп:
«Республика — пирӗн!»
1928

ҪӖНӖ ТУПА

Кулса тӑран хӗвелӗмӗр,
Кампа эс ӑмӑртан?
Пулмашкӑн санӑн евӗрлӗ
Килет вӑл хамӑртан.

Тӗсӳ сан — хӗрлӗ сарӑллӑ.
Эпир те сан тӗслех
Пуласшӑн сасӑларӑмӑр,
Янратрӑмӑр кӗсле.

Ҫапах илем пулмарӗ-мӗн
Ҫак пирӗн ӗмӗрте...
Хӑшне хула бульварлӑхӗ
Сӗткенлӗн ӗмӗртет.

Е темӗскер чӗнет пӗри
Айванлӑн сӗрӗмре,
Ҫапла чечек сӗнетпӗр-и
Чӑн ҫамрӑк ӗмӗре?!

Каҫар, каҫар, хӗвелӗмӗр!
Ҫамрӑккипех пуль ҫав —
Хальччен те сас килмерӗ-мӗн
Мӑнтарӑн сӑвӑҫа.

Каҫар, каҫар, хӗвелӗмӗр!
Паян ак урӑхла
Кӗвелетпӗр терӗмӗр
Пурне те урӑхла.

Ҫӗнӗренех кӗрлерӗмӗр
Паян кун ушкӑнта:
Пӗри пулсассӑн Лермонтов,
Тепри, тен, —
Пушкин та...

Хӗвел хӗрлӗ те сарӑллӑ,
Эпир те ҫав тӗслех
Пулмашкӑн сасӑларӑмӑр,
Янратрӑмӑр кӗсле.

Кулса тӑран хӗвелӗмӗр,
Кампа эс ӑмӑртан?
Пулмашкӑн санӑн евӗрлӗ
Килет-мӗн хамӑртан!

1928

ОКТЯБРЬ АЧИСЕМ

Утар, утар пĕр харăссăн,
Октябрь ачисем!
Хĕвел шевли пек харсăрлăх,
Çиçсем, çиçсем, çиçсем!

Пыратпăр ак урам тăрăх,
Умра — хĕрлĕ ялав.
Хытрах, атьсемĕр, янтăрăр,
Çĕнетĕр кив яла!

Эпир çĕнĕ пăлхавăрăн
Чăн ывăль-хĕрĕсем.
Пур хапрăк-савăт — хамăрăн,
Тăраççĕ кĕрлесе.

Мĕнпур тĕнчен пархатăрĕ,
Мĕнпур телей — пире!
Урхамах пек тракторĕ
Çĕмĕрттерет хире.

Йӳçет тăшман кĕвĕлĕхĕ,
Тăшман çилли урать.
Çурхи кунсен хĕвелĕ пек
Çиçер çапăçура!

Утар ударлăн, харăссăн,
Атьсемĕр, малалла.
Хĕвел шевли пек харсăрлăх
Эпир кăлармалла!

Пыратпăр ак урам тăрăх,
Умра — хĕрлĕ ялав.
Хытрах, атьсемĕр, янтăрăр,
Çĕнетпĕр кив яла!
1928

---
Анкă-минкĕ пуçăм, хура куçăм,
Урăх эпĕ сирĕн чурăр мар!
Шупкаланнă, шаннă кĕрхи уçăм
Паян кун тапратрĕ урăлма.

Ахаль мар хама эп
Тикĕслесшĕн —
Тăвăл пек вăй-халăм ӳснĕ чух.
Авалпа аташнă йĕс кĕслешĕн
Тĕпелте паян кун вырăн çук.

Пăтранмасть ман пуçăм,
Йĕмĕ куçăм,

Эп — ирхи çĕршывăн чăн ачи.
Аллăма тыттарчĕç ылтăн уçă,
Умăмра ман —
Пурнăçăн арчи.

Ылтăн уçă акă часах уçĕ
Самананăн пурлăх арчине.
Ачаллах илемшĕн çуннă кусăм
Илеме ачашлĕ вăл тинех.

Кĕмĕлпе тыттарнă арчара-мĕн
Çитмĕл çичĕ чĕлĕхлĕ тăмра.
Илем те вылям-и,
Янтратам-и?
Савăнам-и юррăм-сăввăмра?

Илем те вылям-и
Эп халавлăн —
Самана ĕнернĕ чĕлхе?
Кĕввĕмре
Кĕлленмĕ тек аваллăх,
Çĕнĕлĕх çĕнтерĕ
Ĕлĕке.
1928

## МĔНШĔН?
*(Агротакмаксем)*

Пăри терĕм — акăнчĕ,
Сĕлĕ терĕм — сапăнчĕ.
Шăтрĕ тухрĕ хуп-хура
Ăш çунтармăш хытхура.

— Мĕншĕн?

Евит пултăр халăха:
Тасатманччĕ вăрлăха.

Сĕллĕм селĕм — куç тулли,
Вырма тăтăм... ял кулли!
Акă măшкăл — вырт та вил,
Пушă хăмăл выр та ил...

— Мĕншĕн?

Пирĕн пурнăç — пурнăç-и:
Кĕллентерчĕ вутпуççи.

— Мĕншĕн?

Пăхăнмарăм чăнлăха —
Чӳхемерĕм вăрлăха.

Акрăм тулă, акрăм вир,
Пулĕ терĕм çăп-çăра.

Вырма тухрăм... манăн хир
Кукша пуç пек çап-çара.

—Мĕншĕн?

Ак ăçта-мĕн тĕрĕслĕх:
Кирлĕ пулнă тирĕслĕк.

Пурнăç, пурнăç хирĕçрĕ,
Выçă юлтăм эп кăçал.
Чышрăм, чышрăм тирĕслĕк,
Пурпĕр тыррăмçăм чăл-чал.

— Мĕншĕн?

Тиркемерĕм вăрлăха —
Тăтăм юлтăм хурлăха.

Аллаттартăм виçĕ хут,
Пулĕ терĕм первăй сурт...
Ах, пĕтерчĕ, ах, каппут —
Пуçа çирĕ сăтăр хурт.

—Мĕншĕн?

Хамах пулнă-çке айван:
Кĕрхи суха тăвайман.

Тарас пирĕн хĕлĕпе
Супрĕ улăм кĕлĕпе.
Пыр та кур ак Тарасна —
Тырри ăнчĕ ăраснах!

—Мĕншĕн?

Вăл акман çав кĕлĕпе,
Акнă улăм кĕлĕпе.

Ял-ял тарăх сас-хура:
Тытмалла теç шур юра.
Чăнахах та вăл пăртак
Усă парĕ-ши, вăртах?

*Вăртах:*

Кам анийĕ шурă юр —
Çавăн сутлăх тырă пур.
Эпир тырă акрăмăр,
Минералне сапрăмăр.
Тĕлĕнен те ахлатан —
Тулă пулчĕ хампа тан.

—Мĕншĕн?

Шереметĕн усси пур —

Аванрах çеç çĕре хур.
Çакă сăвă хыççăнах
Кирлĕ теççĕ хыç сăмах.

— Мĕншĕн?

Тем тусассăн та хресчен
Ăнтарайман пĕр-пĕччен.
Коллективлă пурăнăç —
Ак ăçта вăл çăлăнăç!
1956

ТАКМАК

Савни килет савăнса,
Килет салам каласа.
Ларах, тусăм, хам сума,
Икĕ питӳ — ик улма.

Икĕ куçу — ик çăлтăр,
Пăхса чунăм савăнтăр.
Чĕлхӳ-çăвар вут-кăвар,
Пулар, савни, пĕр кавар.
1929

---
Уç çырупа калаймăн нимĕн,
Уç çырури сăмах кĕске.
Тен, çакăнпах мана асилĕн,
Асилĕн терĕм йĕксĕке.

Пурнап çаплах. Пурнап тумитсĕр.
Çӳçсем ӳсеççĕ лупас пек.
Тăп-тăр урах: Ваçлейĕр, Миттăр,
Примерлă каччă пулас тет.

Ку пурнăçра пурте-мĕн проза,
Поэзисем кирлех те мар.
Çта çĕр улми, унта чăн роза
Яраймĕ нихăçан тымар.

Поэзисĕр кĕпер хываççĕ,
Унсăрăнах кӳлеç çиле.
Халь ыр çынсем сăвă çырмаççĕ,
Эс те ан çырнă пул, Ваçлей...

Çитет, тăван. Çырма çук урăх.
Кăмăл пулсассăн çырса яр.
Тен, Виктора унта эс курăн —
Салам хăйматлăх Ăрсая.
1929

---
Хура çĕр хăй çине ешĕл тум
Уяври пек уртса пĕркенсессĕн

Манӑн сас
Комсомолец юнгштурм
Тӑхӑнса ешелленчӗ тесшӗн.

Ирсенче пӑравус шӑхӑрать
Е ак савӑт вӑйпа ҫӗхӗрет-и, —
Эп калап:
Комсомол похода
Алла-аллӑн уттарчӗ тетӗп.

Ахаль мар паян кун ман куҫа
Ҫак тӗнче
Комсомолӑн
Курнать-тӗр.
— Паян кун
Тӗнчере
Хам хуҫа! —
Теме эп, комсомолец, хатӗр.
1930

УЯВ ЮРРИ

Ялавӑмӑр — ҫулӑм.
Ялавӑмӑр — вут.
Кам тарлӑ кун-ҫуллӑ —
Тӳрех унпа ут!

Вӑл ҫӑлӑнӑҫ панӑ.
Вӑл хывнӑ чӑн ҫул.
Никамӑн ылханӗ
Ӑна ҫитес ҫук.

Кам пусмӑрлӑх, хурлӑх
Кунне курнисем —
Ҫӗршыв, ирӗк, пурлӑх
Туянчӗҫ вӗсем.

Кӗрлет хапрӑк-савӑт,
Шавлать ҫеҫен хир.
Пурте — пирӗн шав вӑл,
Пурте вӑл — эпир.

Патшасӑр, улпутсӑр
Ҫак ҫӗнӗ ҫӗре
Ӗҫри революци
Пиллерӗ пире.

Кам тарлӑ кун-ҫуллӑ —
Ҫавна ҫех тӗнче!..
Улать вут та ҫулӑм
Мӗнпур ҫӗр ҫинче.
1930?

## МАЛАШЛĂХ МАРШĔ

Çак аслă тĕнченĕн пĕр улттăмĕш пайĕ
Пĕлмест канăçа та, çыврас ыйăха та.
Хавас юрăпа-и е паттăр маршпа-и —
Утать çĕнтерӳллĕн ударлă бригада.

Çанталăк хум-шавĕ унпа тавлашаймĕ,
Тăшман-и, хурах-и — ăна çĕнтереймĕ.
Чакмасть, иксĕлмест ун хăватлă вăй-шайĕ,
Хĕвел пек вылять ун, вылять çĕн телейĕ.

Никам хурланмарĕ Британи пек маршăн,
Америк пек маршăн никам та йĕмерĕ.
Эпир — çĕнтерӳллĕ Октябрь таврашĕ —
Уçатпăр мухтавлăн кунтах çĕн Америк.

Ĕнер — çеçен хирччĕ, уратчĕ çил-тăвăл,
Паян — ăмăртуллă Кузбасс, Магнитту вăл.
Ак кӳлĕнчĕ Днепр, час кӳлĕнĕ Атăл!
Мала эс, Союзăмăр — харсăр бригада!

Çак паттăр бригадăн чĕри таппинче эп
Сана та туятăп, чăваш ĕç çыннийĕ!
Хирте, заводра-и е Атăл çинче-и —
Санра та пĕр сасă. Пĕр юррăн çеммийĕ.
1932

## ТĂВАЛЛА МАРШĔ

Чăнкă çул.
Тумхах та тăвалла.
Çак вăл пирĕн çул —
Ĕç çамрăк çулĕ.
Пĕр пăхсан —
Çӳç-пуç йăлт тăмалла,
Тен, чылайăшĕн çаплах та пулĕ?

Анчах, комсомоли,
Эс — парăнми паттăр!
Нимле тăвалла та
Сана хăруш мар.
Маттур çĕкленетпĕр,
Кал-кал хăпаратпăр,
Пире йăтса илчĕ тăвăллă марш.

Пурте мар.
Шăлăнайман çӳп-çап
Чылай,
Пур-ха мĕшĕлтетен мещен те.
Пĕр ик-виç çул хыçран чупсах
Ав — хăшĕ
Ашакла ĕшенчĕç.

Çӳле, комсомоли,

Çӳле, харсăр паттăр!
Нимле тăвалла та
Сана хăруш мар.
Кам çул урлă выртнă —
Хăюллăн çеç таптăр,
Кам йĕрĕнчĕк ертнĕ —
Шăлса вăркăнтар!

Çитес пилĕк çул.
Пулмалла
Çĕршывăмăр
Классăр,
Ултавсăр.
Чăн çăлăнăç
Эпĕр унта тупмалла.
Апла тăк,
Эй, харăс
Утаслăр!

Мала, комсомоли!
Çулсем тăвалла.
Ытлах тăвалла тăк —
Çине тăмалла!
Мала, комсомоли!
Çулсем такăр мар.
Ытах такăр мар так -
Тавай такăрлар!
1932

АТĂЛ ÇИНЧЕ

Атăл, Атăл — çĕршывăн илемĕ —
Хумлăн-хумлăн сикет умăмра.
Камăн чунĕ пăхсассăн çĕкленмĕ,
Кам çӳçенмĕ çак аслă вăйран?

Вăл никамăн ятне пăхăнмасăр
Анлă кăкăрĕпе çул хывса
Ыткăнатчĕ хăватлăн та харсăр
Урăм-сурăм вăй-хал ывăтса.

Икĕ паттăр та аслă çыранĕ —
Икĕ паттăр, пуян йĕкĕреш.
Сĕм вăрманĕ, чечеклĕ çаранĕ
Ун ятне мухтаса ешереç.

Пин-пин çухрăм халат пек вĕçеççĕ,
Акăш евĕр выляççĕ кимсем.
Çта пăхсан та — пурлăх пичечĕ,
Çта пăхан — çавăнта чăн илем...

Анчах темшĕн вăркать паян ман ăш,
Тем çитмест пăшăрханнă чуна...
Шывсен амăшĕ, тинĕс пуçламăш!
Аса илтĕм эп сан авална...

Тухӑр, тухӑр ҫак шыв хӗррине,
Итлӗр Атӑлӑн ӗҫ юррине!
Юрӑ мар вӑл... Вӑл хурлӑх, куҫҫуль.
Вӑл — телейсӗр ирттернӗ кун-ҫул...

Чун илли пек шӑвать йывӑр кимӗ,
Вилӗм евӗр пӑвать-ҫке йӑлмак...
Ма эс килнӗ кунта, ма эс килнӗ,
Юн сурса кайса ӳкнӗ бурлак?

Тутлӑ мар-им сана, хавас мар-им
Ху ҫуралнӑ тӑван кил-йышу?
Е ялта ятлӑ ҫын пулаймарӑн?
Е чун евӗр кӗтен килӗшӳ
Савнӑ тантӑшунта тупаймарӑн?

Е эс ҫӑкӑр чӗлли шыраса
Тартӑн выҫлӑх текен шалкӑмран?
Пур ҫӗрте те, тӑван, пӗр асап,
Пур ҫӗрте те — юнлӑ тӑшман.

Уй-хирте-и е сӗм вӑрманта —
Пӗр пек хуйӑх, пӗр евӗр инкек.
Куланайӗ, хырҫи амантать,
Пӑчӑркаҫҫӗ — пурмис та тиек.

Ҫакӑн пек кун-ҫула чӑтаймасӑр
Ятсӑр-килсӗр пурнан бурлака
Эсӗ килнӗ... ӗмӗр канмасӑр
-Сӗтӗрмешкӗн ют пурлӑха.

Умлӑн-хыҫлӑн улпут караванӗ
Шӑвӑнать таварпа йӑтӑнса.
Ун тавар, унӑн мул, вӑл тарламӗ,
Унӑн кунӗ ҫӑмӑл, ансат.

Унӑн килӗ — хула. Ун керменӗ
Юмахри ҫӑтмах евӗр чипер.
Уншӑн ҫакӑ кимме сӗтрекенӗн
Юн тумламӗ — мерчен пӗрчи пек.

Вырӑссем-и, чӑваш-и, тутар-и —
Пирӗн-пирӗн килсе бурлака —
Юлашки сывлӑшӗнчен вӗт турттарнӑ
Такшинсен пухакан пурлӑха...

Атӑл, эс илем мар-мӗн — куҫҫулӗ,
Атӑл, эс тӑван мар-мӗн — тӑшман.
Асапри халӑхсенӗн кун-ҫулӗ,
Эх, мӗн чухлӗ кунта ҫухалман!

Анчах Атӑл текех пӑхӑнмарӗ,
Хаяр Атӑл ҫитрӗ тулса.
Аҫтӑрханӑн, Хусанӑн, Самарӑн

Ашкӑнас ҫук улпут та купса.

Хӗрлӗ Атӑл текех парӑнмарӗ.
Атӑл, Атӑл! Кӗрле те юрла!
Аҫтӑрханӑн, Хусанӑн, Самарӑн
Тек йӑлмак тӑхӑнас ҫук бурлак!..
1932

ЧӐВАШ КОМСОМОЛӖ

Уй-хирӗмӗр аслӑ, заводӑмӑр ҫӳллӗ!
Пурнатпӑр, атьсемӗр, мӗнпур халпалан.
Пире чӗнсе илчӗ ӗҫпе килӗшӳлӗх,
Пире илентерчӗ план.

Ӗҫе, комсомоли! Ӗҫе, комсотантӑш!
Мӗн пур пек пархатӑр,
Хӑюллӑн карах тар!
Ҫул-йӗрӗмӗр ҫутӑ, умра ҫул тем анлӑш, —
Мала, комсомоли! Мала, комсотантӑш!

Ҫунать пирӗн шухӑш, вылять ҫӑмӑл кӑмӑл •
Электр пек ҫутӑ, халат пек ҫӑп-ҫӑмӑл.
Вӑй-халӑмӑр ҫӳллӗ, вӑй-халӑмӑр паттӑр, —
Октябрь таврашӗ эпир вӑл пулатпӑр!

Ҫул вӑрӑм-ха пирӗн. Тин ҫеҫ купаланчӗ
Пӗр-ик пысӑк савӑт, пӗр-ик комбинат.
Унпа — пирӗн утӑм питрех хыпаланчӑк,
Унпа — пирӗн кӑмӑл малах ывтӑнать.

Тин ҫеҫ сӑн илет-ха колхозӑн уй-хирӗ,
Сахал вӑл ҫӗршывшӑн улт-ҫич МТС.
Унта та пӗр лозунг, пер сасӑ халь пирӗн:
«Ҫӗклен, ӑмӑрту! Парти евӗр ӗҫлес!»

Пур пирӗн мӑн Атӑл. Вӑл аслӑ, вӑл паттӑр.
Хум шавлӑ чӗри ун миҫе ҫул тапать-тӗр?
Мӗн чухлӗ хӑват, мӗн чул киловатт
Куллен-кун хисепсӗр, ахаль тӑкӑнать.

Каларӗ ак парти, каларӑмӑр эпӗр:
— Эй, Атӑл — стихия, вӑйна пире пар!
Санра вӑл пархатӑр, санра ик-виҫ Днепр,
Патне те пыраймӗ хаяр Ниагар.

Турбина пек таптӑр ударникӑн пульсӗ,
Юн сисӗмӗ пултӑр пружин пек хиврe.
Тӑшман хирӗҫ пулчӗ, тӑшман ҫулна пӳлчӗ:
Хаяррӑн пӗрех ҫеҫ тиврет!

Эй, харӑссӑн утӑр —
Ҫул-йӗрӗмӗр ҫутӑ!
Эй, ирӗккӗн, тантӑш —
Умра ҫул тем анлӑш!

Мала, комсомоли! Мала, комсотантăш!
1932

КĔРЕКЕ ЮРРИ

Ик куç тулли колхозăн кĕреки,
Кĕреке те тулли чысăмăр.
Тытăр, тытăр савăнăç курки!
Савăнар, хастарлă йышăмăр.

Кам колхозăн ятне çĕклекен? —
Пирĕнпе кар тăрса ĕçлекен.
Тытăр, тытăр пыллă куркăра,
Шăрантарăр савнă юррăра!

«Хура вăрман урлă эп çул хыврăм
Самар сарă шывне курасшăн.
Ял-йышпа килĕшсе колхоз пултăм
Ĕмĕрлĕхе ырлăх курасшăн.

Сăрт хĕррипе тилĕ юртать-çке,
Куракансем калĕç ух! тесе.
Ытла шăлтăр-малтăр пулас мар,
Ватă çынсем калĕç шух тесе.

И пахчи те пахчи шур купăста,
Çулçине татмасăр пуç пулмасть.
Эсĕрех те ватă, эпĕр — çамрăк,
Ватти ăс памасăр ĕç ăнмасть.

Ыр ут юртать, юртать, пуçне ухать:
Инçе çулне çывăх тăвасшăн.
Колхозпала колхоз ăмăртать:
Ялан малтан мала каясшăн.

Вырăсла та хапха ай хăмисем —
Пурте ватă хырăн ай паррисем.
Пирĕн колхоз ĕçки ай çикисем —
Пурте ватă хуртăн ай пылĕсем.

Улатăртан илтĕм ула ĕне,
Нумай та сумарăм — çу турăм.
Ял-йышпа пĕр пулса, пурнăç туса —
Нумай та иртмерĕ — ыр куртăм.

Кĕмĕл çĕррĕн ахах куç пулсан —
Пулсан пулĕ Хусан лавккинче.
Ай-хай пĕр колхозсем — тăвансем,
Сирĕн пек илемлĕ чĕлхелли —
Пулсан пулĕ хура чĕкеçре...»

Нихçан ан чактăр пирĕн перекет,
Çуллен-çул хăпартăр аслă чысăмăр.
Ĕрехмет, колхозăм, пысăк ĕрехмет!

Мухтав, мухтав сана, хастарлă йышăмăр!
1933

ЧĂНАХ-И?

Ана çинче хытхура,
Пирĕн ялта сас-хура:
Эй, тусăм Çинахви,
Эс кахал теç, чăнах-и?

Колхоз хирте вырмара,
Çинук килте — выртмара.
Эй, тусăм Çинахви,
Çак сăмах та чăнах-и?

Пилĕк-çурăм, ал-ура
Пĕрмай санăн ларура.
Канлĕ теççĕ, чăнах-и,
Санăн пурнăç, Çинахви?

Самăй ĕçе тухнă чух
Сан ыратман çĕр те сук.
Эй, тусăм Çинахви,
Чăн сăмахăн суйи çук.

Ĕçе тытнă-тытманах
Сана тытрĕ тытамак.
Мĕн пулчĕ, Çинахви,
Улталатни, чăнах-и?

Анчах темшĕн ĕçкĕре
Чĕп-чĕрех эс, чĕмере!
Эй^ тусăм Çинахви,
Ку сăмах та чăнах-и?

Ĕçкĕре сан пĕсехе —
Пĕсехе мар, сĕреке!
Эй, Çинук, кăлăхах
Култаран-çке халăха.

Тыр уйăрма тытăнсан —
Сассу ытла çепĕç сан.
Эй, пирĕн Çинахвин
Ытла лайăх юмаххи.

Темшĕн пирĕн Çинуша
Килсе лекнĕ ак нуша.
— Эй, тусăмçăм Çинук,
Чăн сăмахăн суйи çук.

Ĕçлемерĕн таклуша,
Сĕтел çийĕ пуш-пушах...
Эй, Çинук, ăслă пул,
Ăслă пул та ĕçлĕ пул!
1933

АКАТУЙ КАЧЧИСЕМ

(Марш)

Ял-йышăм ян кайрĕ
Ирхи хыпарпа —
Туй пуçĕ çӳрет-мĕн
Улма-чăпарпа.
— Вăранăр, атьсемĕр,
Хĕвел хăпарать,
Садра сарă кайăк
Юрра шăратать.
Çăл шывĕпе уçăр
Пит-куçăрсене,
Йĕнерлĕр, утланăр
Ыр утăрсене!

—Эй, Акатуйĕ!
Кам мала!
Хĕрсен парни
Кама пулмалла?!
—Кала эс, туй пуçĕ,
Кам учĕ маттур?
Кама мухтамашкăн
Сан шухăшу пур?
—Эй, кам урхамахĕ
Сил пек çăрхалать,
Йĕнер çийĕнче
Кам халат пек ларать,
Кам хатĕр каймашкăн
Буденный çарне —
Çавна халаллатпăр
Чи лайăх парне.

—Эй, Акатуйĕ!
Кам мала!
Хĕрсен парни
Кама пулмалла?!
Кам иртĕ, атьсемĕр,
Колхоз каччинчен!
Вут çеç сирпĕнетĕ
Такан качинчен.
Пире ал сулаççĕ
Хĕвел пек хĕрсем,
Пире ыр сунаççĕ
Атте-аннесем.
Утсем тулхăраççĕ, —
Туй пуçĕ, ертсем:
Туя та,
Вăрçа та
Чăн хатĕр вĕсем!

- Эй, Акатуйĕ!
Кам мала!

Хĕрсен парни
Кама пулмалла?!
1936

ÇĔНĔ ÇĔРТЕН КИЛНĔ ÇЫРУ

Кукаçиййĕм! Кунта пурнăç тулăх,
Чӳхенсе çеç выртать ешĕл улăх.
Пĕлĕт уçă. Сывлăш таса.
Тырă-пулă ӳсет кашласа.

Пултаруллă хастар çут çанталăк
Ырлăхне кăтартать савăнмалăх.
Кунти пек пархатарлă вăрман
Халиччен эп ниçта та курман.

Кутамас та патвар ватă кедр:
Ан ӳркен — мăйăрне шĕкĕлче тăр.
Анкарти хыçнелле çеç тухан:
Пĕрлĕхен, шур çырли, хурлăхан.

Катăркасĕ, паланĕ, пилешĕ —
Виноград тейĕн çав, мур илесшĕ!
И çупкам та çупкам пиçет-çке,
Хĕвелпе хĕрелсе çиçет-çке.

Шăмаккийĕ, серти, пултăранĕ:
Темĕнле выçă куç та тăранĕ!
Пурте пур — чăваша юрăхли —
Ие курăк, хĕрен, хир ыхри...

Аслă шыв хĕррине эс тухатăн,
Таврана куç илмесĕр пăхатăн:
Çĕрĕшсе çитĕнет май таран
Йăлăмри тĕтĕреллĕ çаран.

Унта тулă, кунта йĕтĕн-кантăр:
Асатте-асанне те курман-тăр!
Çулсерен тӳпеми мукаçей...
Килсе кур, ан ӳркен, кукаçей.
1949

ÇАМРĂК ТĔПЧЕВÇĔСЕМ
*(Вырăсларан)*

Кăлăх ирттерместпĕр
Пушă вăхăта.
Атьăр-и, атьсемĕр,
Савнă похода!

Çупăрла, ăш çилĕ,
Варкăш сула май!
Пирĕн çитмелли çĕр
Питĕ те нумай.

Çта мĕнле çанталăк,
Çта мĕнле сунар —
Тĕпчесе сăнар та
Хут çине çырар.

Çта мĕн вĕçен кайăк,
Çта мĕнле чечек —
Астуса пыр лайăх,
Чăн тĕпчевçĕ пек.

Шырлана анса пăх,
Ту çине çĕклен, —
Тупăнас пуянлăх
Çавăнта-и тен?

Тен, кунта выртать пуль
Кăмрăк е тăхлан?
Тен, кунтан тапранĕ
Халăхсăр фонтан?

Çавăнпа та пирĕн
Пĕлмелли нумай.
Çилĕ — чун уççийĕ,
Варкăш çула май!
1955?

---
Улăхра чечек нумай
Ешĕл çуркунне.
Хапсăнатпăр-çке пĕрмай
Чи илемлине.
Астарать-мĕн ахалех,
Ахалех чĕнет, —
Алла илнĕ-илменех
Вăл типет, сӳнет.
1955

ÇЫРУ

Тĕрĕс мар вăл. Тĕрĕс мар.
Ахалех ан макăр,
Ху пĕлетĕн: Шупашкар
Çулĕсем тап-такăр.
Ăш çунсан, чун ыратсан
Аса ил: шăллу пур сан.
Тунсăхланă çăмăлпа —
Лар та кил ăш кăмăлпа.

1956?

ВИÇĔ ХĂВАТ

Поэзи ырсемĕн
Пур виçĕ хăват.

Вĕçсе иртнĕçемĕн
Кама куç хывать.
Кам: «Ман сăвапăм!» —
Тесе ыталать,
Çавна виç хăватăн
Вăйне халаллать.

Пĕри вĕсенчен
Чĕлхен чăн илемĕ;
Тепри — чун-чĕрен
Хĕвеллĕ хĕлхемĕ;
Çунатлă ăс теççĕ-
Мĕн виççĕмĕшне.
Ай-хай ас тивесчĕ
Вĕсен çимĕçне!

Пĕри этеме
Маттурлăх парать;
Тепри çĕнтерме
Чĕнет, йыхравлать;
Леш, виççĕмĕш пурлăх —
Çунатлă хăват.
Сĕм авăрсем урлă
Çутта çул хывать.

Поэзи асамĕн
Пур виçĕ хăват.
Тухатмăш — унпа-мĕн
Пире куç пăвать.
1956

*Ноннăна*

Пит маттур-çке Иванов бульварĕ,
Пыллăхри пек çамрăк çăкасар.
Çта çитсен те манăçа юлмарĕ
Шурă тум тумланнă Шупашкар.

Чечекре нар питлĕ сар настурци,
Çăлтăр астра, капăр георгин...
Çамрăк чух, тен, хамăр та маттурччĕ,
Çакна темшĕн эп астурăм тин.

Шухă пулнă, шухăшсăр çӳренĕ,
Такăрлатнă Атăл хĕррине.
Кам шутланă, кам ăна ĕненнĕ
Чи хакли яш ĕмĕр иккенне?..
1956

АТĂЛ ЮРРИ

*Силпи хĕрĕме*

1
Ачаш ача пек Атăл ирхине:
Ăш çил лăпкать, вăл тутлăн анаслать...

Вăран, савни! Уç чатăр аркине,
Мал ен сана хаваслăн саламлать!
2
Ёçри ёçчен пек Атăл кăнтăрла:
Вылять ун çийĕн тĕтĕм те ăрша...
Кунта мухтавлă тинĕс пулмалла,
Эппин, ĕçлер-и, тусăм, тăрăшса!
3
Пусса каччи пек Атăл каçхине:
Юрлать, ташлать, кăшт хĕрĕнкеĕ курнать...
Мĕн пулчĕ, тусăм санăн киммӳне,
Çут уйăх çутинчен ма пăрăнать?
4
Çулри юлташ пек Атăл сĕм çĕрле:
Инçе-инçе чĕнеççĕ çутсем...
Çитер, савни, пĕр тухнă çĕрелле,
Эпир — пулас Мăн тинĕс хуçисем!
1956

КĔРХИ ИЛЕМ

Кĕрхи сăнарăн пур ĕлккемлĕх,
Чуна кайса тивен илем.
Çунаççĕ çулçăсем хĕлхемлĕн,
Вĕçсе иртеççĕ кайăксем.

Палан пек ĕнесем çӳреççĕ
Пас тытнă çеремсем çинчн.
Хĕвелĕн пичĕ пĕчĕкçеçĕ
Ирхи тĕтрелĕх хыçĕнче.

Йĕтемсенче илеççĕ авăн,
Ĕç шавĕ хăлхаран каймасть.
Пахча тулли арпус та кавăн -
Кĕр мăнтăрне ут туртаймасть.
Лаçсем çинче чĕтренчĕк тĕтĕм, -
Сăра çакаççĕ инкесем.
Уяв тесен - ял-йыш пĕр пĕтĕм,
Ĕçре те çавă - пикенсен!

Саламлă, савнăçлă, ĕлккемлĕ
Ик куç тулли кĕрхи илем...
Анчах та темшĕн, тем хĕрхеннĕн
Кăшт ассăн сывласа илен.

Мĕскершĕн тунсăх, кулянулăх
Амаланать пек чĕрере?..
(Салхулăх, кай кунтан, ан çулăх!
Эс ют хальхи поэзире.)

Шавланă-иртнĕ çамрăк шухлăх
Темме çаплах аса килет?..
(Малта?.. Малта мĕн? — Шурă пушлăх
Тесе ак рифма ответлет.)

Мĕнпе кун-çулăм курĕ кунăç,
Мĕскер хăварăп асăнма?
Кĕр кунĕ! Ырлăхлă кĕр кунĕ,
Кĕвĕçтеретĕн эс мана.

Эс пур — кунта ахаль килмерĕн,
Эс патăн мĕн памаллине.
Ним çук çĕре эс çимĕçлерĕн
Хисеп туса ĕç аллине.

Ак халĕ сумлăн уйрăлатăн
Ху тивĕçне хăвах туйса...
Çапла каять çул çитнĕ ватă,
Ун сăнĕ лăпкă та таса.

Юлашки хут ăна чыс тунăн
Кашлаççĕ савнă йăмрисем.
Йĕри-тавра тăраççĕ унăн
Мал ĕмĕтлĕ ывăлĕсем...

———

Поэтăм, вилĕме ан асăн,
Çак пурнăç — ĕмĕрхи илем.
Кун-çулĕ кăлăх пулмасассăн
Вилсен те пурăнать этем.
1956

---
Хĕн-хурлă пултару саманчĕ,
Ăна пĕлмен поэт — айван.
Сăмахăн асапне чăтман çын
Нихçан та сăвăç пулайман.

Чун тарĕпе тухман сăмахăн
Пăшал тытмалăх çук вăй-тар.
Ан ут, поэт, уксах-чăлаххăн,
Сан аллунта шакăртма мар.

1956

САЛАМ КУРКИ

Çĕнĕ çул — çĕнĕ пултарулăх...
Тусăмсем, пĕр çĕрелле!
Татăла пĕлми татулăх
Тыттăр пирĕн эртеле.

Кăйкăр мар, шур кăвакарчăн
Вĕçтерер çӳлĕксенчен.
Çук сăмахшăн, кирлĕ маршăн
Ан писер пĕр-пĕринчен.

Яшлăх, иксĕлми маттурлăх
Пытăр ĕмĕр-ĕмĕре.

Çĕнĕ çул — çĕнĕ пултарулăх.
Хуçа пул кĕрекере!
1956

НОННĂНА

Савнă арăм, савнă арăм,
Кăвакарчăнăм!
Санăн умăнти ман парам
Çăмăл мар, чунăм.

Мĕн кăна тӳссе курмарăн
Тăлăха юлсан!
Сур мана куçран эс, арăм,
Эп çавна мансан.
1956

ĂСЛĂ СТИХИЯ

*Петĕр Хусанкая*

Çил ачинчен ыйтать этем:
—Мĕн хаклă çутă тĕнчере?
—Чăн-чăн хакли вăл маншăн — ирĕк!
Эп — шухă чун, — тет Сил ачи. —
Эп ирĕкре çеç пурăнатăп,
Вăл пулмасассăн — эпĕ çук.
Эх, юрататăп хирсенче
Йӳле ярса çаврăнма;
Эх, юрататăп вăрманта
Тайкаланса каш кашлама;
Эх, юрататăп тинĕсре
Карапсемпе вăй выляма!
Мăнтарăн ирĕк! Сансăрăн
Пултараймасть вăл, Сил ачи.
—Маттур! — мухтать ăна Этем. —
Кам ирĕке сума сăвать,
Çав паттăр çутă тĕнчере.
Анчах Чăн ирĕк ман алра çеç
Хăват пулса тапса тăрать.
Кил, чупкăн вăй, чараксăр кăмăл,
Этем ăсне пăхăнтарам.
Эс ĕлĕк ирĕк Çил ачиччĕ,
Халь пулăн Пултару ачи!

II
Вут ачинчен ыйтать Этем:
—Сана мĕн хаклă тĕнчере?
— Паллах, чăн ирĕк чи хакли,
Эп унсăр мĕн? — тех Вут ачи. —
Эп ирĕкре çеç ялкăшатăп.
Вăл пулмасан сӳнсе ларатăп.
Эп юрататăп хĕлхемрен
Ултавлă çулăм çуратма;

Саватăп сĕм-сĕм каçсенче
Тип шар ярса ахăрашма;
Çунатлă тус — çил ачипе
Эп юрататăп тупăшма.
Эх, ирĕк, ирĕк! Сансăрăн
Пултараймасть вăл, Вут ачи.
—Маттур! — мухтать ăна Этем. —
Кам чунĕ ирĕкшĕн çунать,
Çав паттăр çутă тĕнчере.
Анчах чăн ирĕк ман алра çеç
Хăй хăватне туйса тăрать.
Кил, каскăн вăй, амаклă кăмăл,
Этем ăсне пăхăнтарам.
Эс ĕлĕк ирĕк Вут ачиччĕ,
Халь пулăн Пултару ачи.

III
Шыв ачинчен ыйтатъ Этем:
—Кала, мĕн хаклă тĕнчере?
—Нимрен хакли мана та — ирĕк!
Эп шавлă чун, — тет Шыв ачи. —
Эп ирĕкре çеç хумханатăп,
Хумханмасассăн — пăнтăхатăп.
Эп юрататăп ту çинчен
Шарлак пулса сиксе анма;
Ĕмĕртенпе выртан чула
Ӳпне-питне йăвантарма.
Саватăп тăвăлсем тухсан
Асар-писеррĕн пăлханма.
Эх, ирĕк, ирĕк! Сансăрăн
Пурăнаймасть вăл Шыв ачи.
—Маттур, — мухтать ăна Этем. —
Кам ирĕкшĕн хум çаптарать,
Çав паттăр çутă тĕнчере.
Анчах чăн ирĕк ман алра çеç
Хăват пулса тапса тăрать.
Кил, аскăн вăй, хум шавлă кăмăл,
Этем ăсне пăхăнтарам.
Эс ĕлĕк ирĕк Шыв ачиччĕ,
Халь пулăн Пултару ачи.

Поэзи, эсĕ сил ачи,
Эс вут ачи, эс шыв ачи.
Эс ирĕкшĕн çунса тăран,
Эс хумханатăн, пăлханан.
Сана хăватлă ăс кăна
Илме пултарнă тыткăна.
Стихия — ăсăн аллинче,
Унпа çеç вăйлă çут тĕнче.
1957

*Шараф Мударриса*

Тăлмач вăл — халăх евĕчи,
Тăлмач — чăн туслăхăн кĕперĕ,

Тăлмач — пахчаç. Ун йывăççи
Пĕтĕм çĕршывĕпе ешерĕ.
1957

ТАВ

*А.Канаша*

—Манран вăйли мĕн пур?..
Эп — чир,
Эп — тыткăнлăх,
Эп — çуклăх, —
Тесе мухтаннă тет Хĕн-хур.

— Тĕнче ылханĕ, кай, ан çулăх!
Эп пур çинче — эс çук тек урăх!
Эп — сип,
Эп — ирĕклĕх,
Эп — пурлăх,
Эп — санăн вилĕмӳ, хĕн-хурлăх, —
Татса каланă Пултарулăх.
1957

*А.Ĕçхĕле*

Йăнăшра мар иккен чăн-чăн этем,
Ĕçре, мал ĕмĕтлĕ ĕçре.
Çапла калатчĕç ăслă китайсем,
Çак чăнлăх пултăр тивĕçре,
Вара этемĕн кунĕ-çулĕ
Телейлĕ пулĕ, çутă пулĕ.
1957

ПИЛЛĔКĔН ПĔРТĂВАН
*(Бирма халах юмахĕ)*

Юмах тени чăнах мар,
Анчах суя сăмах мар.
Ват çын янă юптару —
Тĕрĕс çулпа уттару.
Мĕн калам-ши, хурăнташ?
Лартăм сĕтел хушшине.
Алла илтĕм кăранташ,
Шурă хута хуратса
Çыртăм чĕрем хушнине, —
Вĕрентсе мар, юратса.
Пĕр кăкран, пĕр чăмăртан
Пулнă пиллĕкĕн тăван.
Тĕнчере никам нихçан
Вĕсенчен туслă пулман.
Пилĕк тăван нихăçан
Пĕр-пĕринчен уйрăлман:
Айваннине ал панă,
Халсăррине хал панă.
Юмах çулĕ яп-яка,

Пурнăç сакки сарлака...
Çак пурнăçра мĕн паха?
Чи ырри, чи аванни
Этем тату пурăнни, —
Çавă кирлĕ халăха.
1957

---
Авалхи садăмра, астăватăн пулсан,
Эсĕ лартнă пĕр йывăç пур ман.
Тăвăл çапрĕ ăна, хупăрларĕ тусан,
Анчах унăн тымарĕ хăрман.

Кил, пĕрле тăприне кăпкалар,
Шăварар, суранне им-çамлар.
Чĕрĕл, туслăх, çулçă кăлар,
Сансăр пирĕн пахча хăтлă мар.
1957

ТАВ САНА

*П. Хусанкая*

Кам тӳссе ирттерчĕ çынпа тан,
Кам ырра усал теме хăймарĕ,
Усала айваннăн пуç таймарĕ,
Çав калатăр пĕтĕм кăмăлтан:
Çамрăк ĕмĕр харама каймарĕ!

Пултаруллă тусăм, тав сана!
Эп кунта вун çичĕ çул пулмарăм,
Пуласса та, ахăрнех, сунмарăм,
Анчах та тивлетлĕ сăнарна
Чĕрĕ хальлĕн чĕремре упрарăм.

Вăй паратăн — ывăнса çитсен,
Сас паратăн — шухăша кайсассăн,
Е хĕвеллĕ çумăр пек ачашшăн
Ислететĕн чун типсе килсен...
Ахаль мар эп тайăлса каласшăн:
Чăвашсен пĕр лайăх сăмах пур —
Юлташ пултăр хăвăнтан маттур!
1957

«ТАЙАР» ПОЭМĂРАН

---
Тăван чĕлхем! Таса хĕлхем
Парсам пăлхавлă чунăма.
Пар чăнлăх, савăнăç, илем,
Пар ирĕк — çутăрах çунма.

Ĕшеннисемшĕн çул çинче
Эс — шанчăк çăлтăрĕ ялан.

Тискер тӑманлӑ каçсенче
Йыхравлӑ чан пек янӑран.

Çунат паратӑн çамрӑка,
Ватта чун канӑçӗ кӳрен.
Сӳнсе кӗлленнӗ кӑмрӑка
Вут кайӑк сывлӑшӗ кӗртен.

Хыпса çунан çӗршывӑма,
Чӗлхем, сипетлӗ çумӑр яр.
Хӗвел хӗм панӑ сывлӑма
Мана та пӗр тумлам сыптар.

Сӗткенӳпе шӑварӑнса
Шаланкӑ евӗр çӗкленем.
Çӳлте çуйхавлӑн ярӑнса
Этемшӗн савӑнаç чӗнем.
-
Ан тив, хисеп те, чыс та ан курам.
Пин юррӑмран пӗри анчах юлайтӑр.
Ӑна тӑван ыр кӑмӑлпа юрлатӑр, —
Вара ман канлӗ пулӗччӗ тӑпрам.

---
Çӳресе çинçелмен çӳрен ут...
Лар, савни, вӗçтерер пӗрех хут!

Ытарса илейми чечен ир,
Куçпала виçейми çеçен хир...

Лар часрах! Ӑш вӑркать, ӑш çунать..
Кукалет — çул ыйтать çил çунат.

Ереветлӗ чаршав пӗлӗтсем
Уçӑлайччӑр эпир вӗçнӗçем.

Шӑпӑрне çухӑртса сил ачи
Чуптӑр пирӗнпеле катаччи.

Туссан тус лайӑхрах, çил-тӑман!
Ирӗк, ирӗк!...
Тӑван, мӗн тӑвам?

Янкӑс чун ямшӑкла кӑтӑртса,
Е ярам-и ши-ши! шӑхӑрса?

Тапса сиктӗр маттур çӳрен ут,
Пӑхса юлтӑр, ан тив, çичӗ ют.

Камӑн çулӗ пире хирӗç мар —
Ларкӑча тус-йышла сиксе лар!

Савнӑç, савнӑç!
Чупту, ытала!
Ямшӑк тус, хулленрех хӑвала...

Киленсе куҫ хупса иличчен
Ялӑм юлнӑ таҫта ҫитиччен.

Юр ӳкет — и лапка та лапка...
Пурнӑҫ, пурнӑҫ, ытла ан васка!
Ҫамрӑк ӗмӗр — самант.
Ун парни —
Ҫут шӑнкравлӑ кӗҫ-вӗҫ ҫӑварни.

**Анатри юрӑ**

Ман пурлӑхӑм чух, пин ылтӑнӑм ҫук,
Нумай кирлӗ мар тӑван пӗрле чух.

Нумай та пӗтет, сахал та ҫитет,
Тату пурнӑҫа, элле, мӗн ҫитет?

Пурри вӑл — пӗрле, ҫукки — ҫурмалла.
Тата, тӑвансем, мӗнле пулмалла?

Ҫӳлтен ӗрехет сайра пӗрӗхет,
Ҫапах иксӗлмест пирти перекет.

Ырсенӗн ырсемӗ — Управ та Тирпей,
Эсир пирӗн хунта, шанчӑк, телей.

Ӑс патӑр ватти, вӑй патӑр яшши.
Этем, этеме ан пул ытлашши.

Тивлет те сӑвап, мухтав та пехил
Сана, ыр ӗҫре хунан таса кил!

Мухтав та пехил ӗмӗр-ӗмӗрне
Тарпа тӑварланнӑ ыраш ҫӑкӑрне!

**И мӗн пуян...**

И мӗн пуян, тӑванӑм?
Сывлӑх пуян.
Сывлӑх ҫул памасӑр ҫта каян?

И мӗн пуян, тӑванӑм?
Туслӑх пуян.
Пин ылтӑн мар, пин тус эс туян.

И мӗн пуян, тӑванӑм?
Халӑх пуян.
Унсӑр пуҫне кама пуҫ таян?

Эс те пуян, тӑванӑм,
Эп те пуян:
Пуҫӑмӑрта сывлӑх пур паян.

Сывă пулар, тăванăм,
Туслă пулар,
Халăх ирĕкĕнчен ан тухар.

**Мишавай юрри**

Хир-хир урлă çĕр виçсе эп тухрăм:
Шухăшларăм — çак юрра эп тупрăм.

Пархатарлă пирĕн ен, тăванĕ!
Ялан тулăран тулă йăранĕ.

Аташтармĕ сарă тул йăранĕ —
Аташтарĕ янтă мул тăванĕ.

Тĕнче мулĕ — мĕскĕнсен куççулĕ, —
Ан ăмсанăр, пуçăра хĕн пулĕ.

Хир-хир урлă сахал мар хутларăм:
Çак юрра эп ахаль мар юрларăм.

**Вун тăваттă çапсан**

— Çапать кун чанĕ вун тăваттă,
Çалам пĕрремĕш апреле!
Ĕнтĕ ман хурлăхлă йăва та
Пăртак çуталчĕ темелле.

Чуна уçса пăлхавлă вăркăш
Кĕрет хĕç карнă кантăкран.
Тĕнче ăшши кунта та пур кăшт
Чĕре таппи чарăнмасан.

Туятăп, ав каплам-капламăн
Мăн Атăлта тапраннă пăр.
Эпир хăçан çапла, тăванăм,
Çĕр чĕтретсе тапранăпăр?

Çĕклен, кам выçлăх, кам чуралăх
Кунне текех курасшăн мар.
Вăркать ăш-чик, çунать хаярлăх,
Пĕр харăс çапăçма тухар! —

Çапла вăл алăкăн-тĕпелен
Утса хăйпе хăй сăмахлать.
Пĕрре çиçсе илет хĕвелĕн,
Тепре сĕм каç пек шăмарать.

Е акă темĕскер астунăн
Пуçне тытать ик аллипе.

Çунат, çунат пулинччĕ унăн,
Ытла та мăшкăл каплипе!..

Çил кайăк евĕр, тăвăл умĕн
Çӳресчĕ тинĕс çийĕпе;
Е хум пулса пăлхавăр кунĕ
Тапасчĕ аскăн çилĕпе...

Ларать пĕччен пĕр камĕрта вăл,
Кун хыççăн кун ахаль иртет...
Жандарм калать: «Семенов, тайăл!».
Семеновĕ: «Эп — Тайăр!» — тет.

Ĕнтĕ çулталăк тыттармаççĕ
Ăна хутпа кĕнекене.
Чи пысăк хурлăх çакă мар-ши
Пăртакçă ăс пĕлекене?..

Шарланкă тăраймасть кĕрлевсĕр,
Вĕçмесĕр пурнаймасть хăлат.
Çырман поэт чăн-чăн телейсĕр,
Вăл, пулă пек, типпе юлать...

Ак çапрĕ, çапрĕ вун тăваттă,
Хускалнă вăй Мăн Атăлта.
Çĕклентĕр тĕлĕрнĕ хăватăм, —
Çур кунĕ ялтăрать тулта!

Тап-тап пусса кал-кал утам-и,
Кисрентĕр цементлă урай.
Çĕлен пек сăнчăрăн ытамĕ
Ан пустăр кăкăра пĕрмай.

Ăçта эс, вутлă чăн сăмахăм,
Илемӳпе мана çутат! —
Çапла вăл тăлăххăн-хăраххăн
Кун кунласа утать, утать...

Çук, халь ĕнтĕ вăл тăлăх мар тек:
Вăл туйрĕ турă пуррине...
Ĕмĕрлĕхех поэт ăнкарчĕ —
Çав турă юрă иккенне!

Ĕнтĕ тулать пек хĕсĕк пӳлĕм
Хăватлă юрă-сăвăпа.
Пăхăнтаруллăн, çĕнтерӳллĕн
Кĕрлет йыхравлă йĕс труба.

Пĕр харăс уççăн хуравлаççĕ
Ăна хĕн-хурлă флейтăсем.
Чĕнет, хистет, янрать мăнаçлăн
Фанфара кĕвĕ ӳснĕçем.

Çĕр çĕмĕрсе маттур çар умĕн
Утса килет мăн параппан.

Вĕçĕ-хĕррисĕр халăх хумĕ
Тапса тăрать пур урамран...

— Аркат, çунтар, тĕп пултăр хурлăх,
Эпир çĕн никĕс хывмалла.
Мĕнпур тĕнче, пур ырлăх-пурлăх
Сана çеç, халăх, пулмалла.

Герой-и, турă-и, патша-и —
Пире никам та çăлас çук.
Ху тивĕçне ху çапăçса ил,
Шаккар-ха тимĕр хĕрнĕ чух! —

Çапла вăл алăкăн-тĕпелĕн
Кун кунласа хутлать-хутлать.
Чăваш çĕрне хăват кĕртмелĕх
Вут хĕç пек сăмахсем туптать.

Вăл тăлăх мар, вăл паттăр çарăн
Мухтавлă юррине илтет.
Жандарм калать: «Семенов, чарăн!»
Поэт: «Юрра чараймăн!» — тет.

---

Çăлтăр хушка, ан хашка
Сывлăш çаварми.
Тĕк татнă пек ан васка, —
Иртрĕ çăварни.

Сыв пулăрах, тусăмсем, —
Вăхăт ăсанма.
Вылянисем-кулнисем
Юлччăр асăнма.

**Пуç янисен юрри**

Çăлтăр витĕр çул курăнать,
Куççуль витĕр кун курăнать...

Çунатăм, юлатăн. Ан макăр.
Салтак пек маттур уйрăлар.
Ман çул — çăлтăр витĕр — тап-такăр,
Ман кун — куççуль витĕр — уяр.

Пире çурçĕр çилĕ ыталĕ,
Ачашлĕ кăра шартлама.
Çуталĕ жандармăн медалĕ,
Вăл памĕ çулра аташма.

Спасибо! Савса ывăлларĕ
Мана Сармантей самани.
Юрлар-и, кулса уйрăлар-и?
Тен, ĕмĕрлĕхех... чун савни!..

**Элеги**

*Савнӑ Ульхана*

Каясси ман каллех — вӑрӑм ҫул,
Курасси ман каллех — темӗн чул...
Тусӑм, тусӑм, мӗн пулчӗ? Мӗн килчӗ?
Тӗрӗс-тӗкел пурнар тенӗ чух
Ак каллех уйӑрлмашкӑн тӗл килчӗ...

Юлтӑн, юлтӑн инҫе, аякка.
Сӑрт-тусем, шыв-шурсем, сӗм тайга —
Пирӗн хушшӑмӑра хупӑрларӗ.
"Ылхан витнӗ ҫӳрен кайӑка
Ҫта ҫитсен те канӑҫ пулмарӗ.

Ак умра сарӑлса шыв юхать,
Улӑхпа сивӗ лӑм улӑхать.
Чупса антӑм: тӑван Атӑл мар-и?
Ҫук, ку шыв ҫичӗ ютӑн сывлать —
Сӗлкӗш Обь — пӑрлӑ ҫурҫӗр тымарӗ.

Вӑл шӑмарнӑ паян темӗскер.
Хура хумӗ юнавлӑ, тискер.
Е пире вӑл хапӑл тумарӗ?
Е хӑниййӗ эпир — кӗтменскер?
Е чалтун чӑваша палламарӗ?

Кама калӑп хам хуйхӑм ҫинчен?
Кама чӗнӗп чӗлхем ҫӗтиччен?
Кӑлӑх пулӗ — сассӑм пӑчланӗ.
Анӑҫран тухӑҫа ҫитиччен —
Хырлӑх мар-мӗн — хурлӑх вӑрманӗ.

Ҫитӗ вӑхӑт, мана манӑҫа
Эс хӑварӑн. Пурнан пурнӑҫа
Кайӑкла ирттерме ҫтан пултарӑн?
Эпӗ панӑ айван шанӑҫа
Шур пӳспе чӗркесе эс пытарӑн.

Эп ҫаплах хам пуҫтах пуҫӑмпа
Утӑп, утӑп асаплӑ ҫулпа —
Чӑтлӑхсем, шыв-шурсем, тусем урлӑ.
Ҫтан чӗнен сана, тусӑм, хампа:
Инҫе ҫулӑм ытла та хӗн-хурлӑ!..

**Ан кулян**

Шавлӗ вӑйӑ-кулӑ
Кӗр уявӗнче.
Эсӗ ҫеҫ салхуллӑ
Ларӑн ҫын ҫинче.

Тав туман курканӑн

Йӳççине чăтса
Асăнăн, хурланăн
Куççульне çăтса.

Ан кулян, ан усăн!
Паттăррăн тăрса
Аякри тусушăн
Шалт ĕç тав туса.

Ун чĕрин хĕлхемĕ
Ахаль мар çунать —
Пурăнăç илемĕ
Килессе шанать.

**Юрă**

Мул тĕнчине тĕп тумалăх
Халăх утать чăн çулпа.
Ирĕклĕх, танлăх, тăванлăх —
Çакă вăл пирĕн тупа!

Тухăр, тапранăр пĕр харăс,
Пурте — сăваплă вăрçа!
Халăх, текех тарçă мар эс,
Ху телейпе хăв хуçа.

**Чул çыран хĕрринче**

Чул çыран хĕрринче пĕчĕк пӳрт,
Юр тултарнă мăрйийĕ таран...
Мăнакка, хăвăртрах уçса кӳрт,
Çитсе ӳкрĕм паян эп аран.

Урараn ӳкерен шартлама
Кун каça муталарĕ пире.
Ни ĕçпе, ни вутпа ăшăнма,
Тумтирри тумтир мар-çке çире!..

Чĕрт, аппа, вучахна... Çак яшка...
Салтăнам... Ăшăнма эп ларам...
Малашне те пулсан çакнашкал —
Тĕнчере пурăнни те харам...

Куллен-кун хăшкăла-хăшкăла
Хырăмшăн хырăмпа шăвăнан.
Çынлăхран кăларан мăшкăла
Хăçанччен тӳсмелле-ши, тăван?..

Çун, вучах! Ĕнтĕркенĕ вăй-хал,
Тепĕр хут йăл илсе амалан.
Курасси, тен, нумай,
Пурнасси, тен, сахал...
Мĕн пулать, мĕн килет —
Тапалан!..

**Икĕ çыру**

I

*Хусанти юлташсене*

Хăямата янисене ан манăр,
Харкамăн хăйĕн ăраскал.
Салам сире! Аякри тăванăр
Упрать-ха сых ятне вăй-хал.

Е кĕтнĕ кун çитес пулсан пĕр те пĕр —
Эп çунăп иртнĕ хĕрӳпех, —
Ăмăртăва тухан яш-кĕрĕм евĕр,
Вăй-кил кӳртен мăн кĕрӳ пек.

Эп таврăнăп йăвашшăн та хаяррăн —
Çĕршыв туй-çуй тапратнă чух.
Хавхалануллă такмаксем хайларăм,
Туй намăсне ярассăм çук.

Çапла, кĕрӳ килессине ан манăр —
Е çур çĕрте, е кăнтăрла...
Салам сире! Аякри тăванăр
Вăй-хал кӳртме таврăнмалла!..

II

*Кĕçтук Иванова*

Эп курнă тĕнчере чĕр тамăк,
Эп курăп çăлăнăç кунне!
Саламлăн уçăлать ытамăм
Паян, çĕршывăм, сан енне.

Эс манăн шанчăка сыхлатăн
Хаяр та шалкăм кунсенче.
Чĕпписене шыран хăлатăн
Вĕçетĕн ман шухăшсенче...

Каллех ак Атăлăн тав-шавĕ
Мана йыхравлăн тухатать...
Нихçан та сан йăху хавшамĕ,
Тăван çĕршывăм, тупата!

Эп саншăн çĕнĕрен çуралтăм,
Эп мантăм пур йывăрлăха.
Çĕкленчĕ сыпăннă çунатăм
Каллех хĕвеллĕ анлăха.

Тапранчĕ чун хаваль хавассăн
Сан ăшшупа амаланса.
Хĕнпе хĕрсе туптаннă сассăм
Каллех ян хурçă пек таса!..

Телейлĕ ачисем Адамăн —
Умра ыр шанчăк пур чухне.
Тĕп пултăр тĕнчере чĕр тамăк!
Çул пултăр çăлăнăç кунне!

---

1948-1956